им М Горьк
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Февраль
27
ЭРНЕКУН
№ 40 (8949)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Чăваш АССР-ĕнчи ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйлании итогĕсем (1 стр.).

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен суйлав комиссийĕ ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче суйланин итогĕсем çинчен пĕлтерни (1 стр.).

Çуракине тĕплĕн хатĕрленер! (1 стр.).

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче суйланă депутатсен спискĕ (2 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: **М. Кузьмин.**—Партиллĕ ĕçе планласси çинчен (2 стр.).

Ольга Чечеткина.—Лидия Тимашук почти (3 стр.).

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ: **А. Талвир.**—Миршĕн кĕрешме пулăшакан кĕнеке (3 стр.).

Совет Çарĕ 35 çул тултарнине Китайра уявлани (4 стр.).

Шыв тулнипе сиен курнă Англи халăхне Совет Союзĕнчи обществăллă организацисем пулăшни (4 стр.).

Шыв тулнипе сиен курнă Голланди халăхне Совет Союзĕнчи обществăллă организацисем пулăшни (4 стр.).

Партиллĕ-организациллĕ ĕçе—партин çĕнĕ задачисен çӳллĕшне

Ленин—Сталин партийĕн XIX-мĕш съезчĕ партипе совет халăхне коммунизм строительствин питĕ пысăк программипе хĕçпăшаллантарчĕ. Промышленноçпа ялхуçалăхĕн производительнăй вăйĕсене малалла аталантарма палăртнă çав программăна пурнăçлани пирĕн çĕршыва тата хăватлăрах, никам çĕнтерейми çĕршыв туса хурать. Парти политики, унăн планĕсем эпир малашне тумалли ĕçсене тата малалла каймалли çулсене палăртса параççĕ,—парти политикипе планĕсем коммунизм строительстви çинчен Сталин юлташ туса хатĕрленĕ наука çине таянса тăраççĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсене, хамăр çĕршывра коммунизм тумалли сталинла аслă программăна ăнăçлă пурнăçлама май паракан паха услови партиллĕ-организациллĕ ĕçĕн шайне хăпартни пулать. Пирĕн парти яланах организациллĕ руководство политикăллă руководствăпа пĕр шайра пултăр, организациллĕ ĕç парти политикипе парти решенисене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме май патăр тесе тăрăшать.

«Çĕнтерӳ нихçан та хăй тĕллĕн килмест,—ăна яланах çĕнсе илеççĕ,—тесе вĕрентет Сталин юлташ.—Партин генеральнăй линийĕшĕн тăрса, лайăх резолюцисемпе декларацисем йышăнни вăл—ĕçĕн пуçламăшĕ кăна пулать, мĕншĕн тесен, вĕсем çĕнтерӳ мар, çĕнтерме кăмăл пуррине çеç пĕлтереççĕ. Тĕрĕс линие кăтартса панă хыççăн, ыйтăва тĕрĕс татса панă хыççăн, ĕçе ăнăçлăн тăвасси организациллĕ ĕçсенчен, парти линине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес ĕçе организациленинчен, çынсене тĕрĕс суйласа илнинчен, ертсе пыракан органсен решенийĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăнинчен килет».

Сталин юлташ кăтартса панисене пурнăçласа, пирĕн партин вырăнти организацийĕсем партиллĕ-организациллĕ ĕçе вăйлатса, государствăпа хуçалăх ĕçĕсене ертсе пымалли майсене лайăхлатса пыраççĕ. Кунпа пĕрлех партин нумай организацийĕсенче партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе япăхтарса янине халĕ те çаплах пĕтерменнине те курмасăр тăма юрамасть. Организациллĕ ĕçĕн шайĕ халĕ те-ха пурнăç ыйтнинчен, парти кăларса тăратнă задачăсем хушнинчен юлса пырать.

Парти органĕсем—политикăллă руководство органĕсем. Çакăнтан килеççĕ те ĕнтĕ парти органĕсем советпа хуçалăх организацийĕсене тата обществăллă организацисене ертсе пымалли майсем. Парти комитечĕсен советпа хуçалăх органĕсен ĕçĕсене пĕрлештерсе, çул кăтартса пымалла тата тĕрĕслесе тăмалла. Парти енчен хуçалăх органĕсене ертсе пымалли май, тесе кăтартса парать Сталин юлташ, çав органсене тăтăшах пулăшса пырасси, вĕсене тĕреклетесси тата хуçалăха çав органсемсĕр мар, вĕсем урлă ертсе пырасси пулать.

Анчах, калас пулать, партин вырăнти органĕсем тĕрĕс мар майсемпе ĕçлени, хуçалăх ыйтăвĕсемпе çеç ĕçлесе, партиллĕ-политикăллă тата идеологиллĕ ĕçе манăçа хăварни, советпа хуçалăх организацийĕсем вырăнне ĕçлени халĕ те час-часах пулать-ха.

Çавнашкал фактсем партин Запорожье облаçĕнчи организацийĕсенче анлăн сарăлнă. Сăмахран, партин Каменско-Днепровски райкомĕ пур ыйтусене те, çав шутра хуçалăхри пĕчĕк ыйтусене татса парассине те хăй çине илет. Вăл, çавнашкал ĕçлесе, советпа хуçалăх органĕсем хăйсем тумалли ĕçшĕн ответлă пулассине пăрахăçа кăларнă. Советпа хуçалăх органĕсемшĕн парти райкомĕ ĕçленĕ пирки, советпа хуçалăх органĕсем хăйсен ĕçне туман пирки, районта партиллĕ-политикăллă ĕçе япăхтарса янă, хуçалăхри задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе кая юлнă. Облаçра партин ытти хăшпĕр райкомĕсем те çавнашкал майсемпе ертсе пыма пăхаççĕ. Çакăншăн пуринчен малтан партин Запорожье обкомĕ айăплă, вăл халĕ те çаплах парти органĕ тума тивĕçлĕ мар ĕçсене туса пырать, час-часах советпа хуçалăх органĕсем вырăнне ĕçлет, райкомсене те çавăн пекех тума тĕртет.

Çакăн пек тĕрĕс мар ĕçлени, пĕр енчен, советпа хуçалăх органĕсен активлăхне тата ответлăхне чакарать, тепĕр енчен, парти комитечĕсене принциплă ыйтусем тĕлĕшпе тимлĕ пулма, партин шалти ĕçĕ çине тата массăсем хушшинчи политикăллă ĕç çине çителĕклĕ çаврăнса пăхма май памасть.

Çакăн пек задача тăрать: парти органĕсем совет, хуçалăх тата хатĕрлев организацийĕсем вырăнне ĕçлени, вĕсемшĕн пĕчĕк ĕçсене те туса пыни, вĕсен ответлăхне чакарни пулмалла мар, çав органсене парти енчен ертсе пырассине лайăхлатса пымалла. Тĕрĕс мар практикăна, парти организацийĕсем çав органсен ĕçне контроллесе тăманнине тата вĕсене ертсе пыманнине, çав органсем тумалли ĕçсене—хуçалăхпа совет органĕсем татса памалли ыйтусене, уйрăмах ялхуçалăх кампанийĕсемпе хатĕрлев ĕçне парти органĕсем туса тăнине чăннипех пĕтермелле. Парти комитечĕсен совет, хуçалăх тата хатĕрлев органĕсене тĕрĕсленĕ, лайăх хатĕрленнĕ кадрсемпе çирĕплетессишĕн пĕрмаях тăрăшмалла, çав органсем хăйсене хушнă ĕçсемшĕн, государство планĕсене вăхăтра пурнăçлассишĕн ответлă пулассине ӳстерсе пымалла.

Ку вăл парти органĕсем хуçалăх ĕçĕнчен тата хуçалăха ертсе пырассинчен пăрăнса тăмаллине пĕртте пĕлтермест. Партиллĕ ĕçĕн тĕллевĕ пирĕн организацисем пурте хуçалăхлă-политикăллă задачăсене лайăхрах пурнăçласа пымалла тăвасси пулать. Сталин юлташ: политикăна хуçалăхран уйăрма çук, тесе вĕрентет. Вĕсем пĕрле пурăнаççĕ тата пĕрле ĕçлесе пыраççĕ. Çавăнпа та пирĕн практикăллă ĕçре кам та кам хуçалăха политикăран уйăрма, политикăллă ĕçе вăйсăрлатнипе хуçалăхри ĕçе вăйлатма шутлать е, тепĕр майлă каласан, хуçалăхри ĕçе вăйсăрлатнипе политикăллă ĕçе вăйлатма шутлать, вăл вара тупика кĕрсе ӳкет. Хуçалăх ĕçĕпе партиллĕ-политикăллă ĕçе тĕрĕс çыхăнтарса туса пымалла, вĕсем пĕр-пĕринчен юлмасăр ăнăçлă пулса пыччăр.

Партиллĕ-организациллĕ ĕçе лайăхлатас тени парти организацийĕсен кĕрешӳ пултарулăхне ӳстермеллине, партин шалти ĕçне мĕнпур майсемпе вăйлатса пымаллине, партири демократие аталантарса пымаллине пĕлтерет. Пирĕн партин вăйĕ партири массăсем активлă пулнинче тата тăрăшса ĕçленинче, вĕсем парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешнинче.

Çав вăхăтрах партин хăшпĕр организацийĕсенче партин шалти ĕçне питĕ çителĕксĕр туса пыраççĕ, партин шалти демократине пăсаççĕ. Ку вăл, уйрăммăн илсен, суйламалли тата коллегилле ĕçлемелли принципсене пăснинче, парти комитечĕсен пленумĕсене, актив пухăвĕсене тăтăшах ирттерменнинче, хăшпĕр организацисенче самокритика тата аялтан килекен критика çителĕксĕр саралнинче, парти органĕсене суйлас вырăнне, хăшпĕр чухне кооптаци тунинче палăрать. Юлашки вăхăтра чылай парторганизацисенче, сăмахран, Пушкăрт республикинчи, Ташкентри тата ытти парторганизацисенче, çав организацисенче нумай пулмасть конференцисем пулса иртнĕ, вĕсем парти комитечĕсене суйласа хăварнă пулин те, кооптаци тăвас çул çине тăнă.

Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă КПСС Уставĕ партин шалти демократине аталантарса пыма, парти массисен активлăхне тата вĕсен пуçарулăхне ӳстерсе пыма чи лайăх майсем туса парать. Партин вырăнти органĕсен парти организацийĕсем Устав хушнисене пĕтĕмпех тĕрĕс пурнăçласа пынине тата партин шалти демократине пурнăçласа пынине çирĕппĕн асăрхаса тăмалла. Партин ертсе пыракан органĕсене кооптаци тумалли практикăна татăклăнах пĕтерсе хумалла, мĕншĕн тесен суйлас вырăнне кооптаци туни суйлава ниме пĕлтермен ĕç туса хурать, критикăпа самокритикăна хăйне майлă хĕсни пулать, кадрсене ĕçе уйăрса лартассине тата воспитани парассине сиен кӳрет, çавна пула суйласа лартнă работниксем партири массăсем умĕнче ответлă пулнине туйми пулма пуçлаççĕ.

Партин шалти демократине аталантарса пырасси парти Уставĕнче парти организацийĕсене отчетсемпе суйлавсем ирттересси, парти комитечĕсен пленумĕсене тата актив пухăвĕсене ирттересси çинчен каланисене пĕрмаях пурнăçласа пымаллине пĕлтерет, мĕншĕн тесен ку вăл партин шалти пурнăçне тĕрĕс организацилемелли паха услови пулать. Коммунистсен активлăхне ӳстерес, партиллĕ ĕçе вăйлатас енĕпе коммунистсен пĕрлехи пухăвĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ,—çак пухусен рольне ӳстерсе пырас пулать. Парти комитечĕсен парти организацийĕсенче самокритикăпа аялтан килекен критикăна чăннипех анлăн сарса пыма условисем туса памалла, — самокритикăпа аялтан килекен критика ĕçри çитменлĕхсемпе кĕрешмелли хăватлă май пулса тăрасçĕ.

Парти организацийĕсен парти составне малашне те лайăхлатса пымалла, парти ретĕнче тăракансен йышĕ пысăкрах пултăр тесе çеç тăрăшни пулмалла мар, парти членĕсен тата парти членне кĕмелли кандидатсен политикăллă шайне, вĕсене марксизм-ленинизма вĕрентсе пиçĕхтерессине пуринчен ытла тăрăшса туса пымалла. Коммунистсен политикăллă активлăхне малалла ӳстерсе пымалла, парти членĕсене пурне те парти политикипе решенийĕсене пурнăçлассишĕн хăватлă кĕрешекенсем, ĕçри çитменлĕхсене тӳссе тăман, çав çитменлĕхсене çине тăрса пĕтерсе пыма пултаракан çынсем тума тăрăшмалла.

Партиллĕ-организациллĕ ĕçри пысăк задача организациллĕ руководствăри çитменлĕхсене пĕтересси пулать. Чылай çĕрте ертсе пырас ĕçе пĕрмаях ларусем ирттернипе тума хăтланни ытлашши саралнă. Нумай организацисен ертсе пырас ĕçĕнче работниксене тĕрĕс суйласа илесси тата решенисене пурнăçланине тĕрĕслесси кирлĕ пек вырăн йышăнайман.

Кадрсемпе ĕçлесси тата решенисене пурнăçланине тĕрĕслесси организациллĕ ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăрать. Кадрсене тĕрĕс суйласа илмесен тата вĕсене тĕрĕс воспитани памасан парти решенийĕсене ăнăçлăн пурнăçлама май çук. Коммунизм строительствин интересĕсем çапла тума хушаççĕ: парти органĕсен парти организацийĕсенче кадрсене суйласа илес, ĕçе лартас тата пысăкрах ĕçе куçарассине чăннипех лайăхлатма çине тăрса тăрăшмалла, работниксене партие чунтанчĕрен парăнса ĕçлеме, партипе государство дисциплинине çирĕппĕн пăхăнма, политикăллă сыхăлăха мĕнпур майсемпе ӳстерсе пыма тата тимсĕрлĕхпе, çăвара карса ларнипе, çитĕнӳсемпе шавлăн мухтаннипе кĕрешме вĕрентмелле.

Партин XIX-мĕш съезчĕ руководствăн пĕтĕм системинче, мĕнпур организацисемпе учреждениесен ĕçĕнче — çӳлтен пуçласа аяла çитиччĕнех решенисене пурнăçланине тĕрĕслессине мĕнпур майсемпе вăйлатса пымаллине кăтартса пачĕ. Çакна асра тытас пулать: решенисене пурнăçланине тĕрĕслесе тăмасан партипе правительство панă директивăсене тата вĕсем йышăннă решенисене пурнăçлас енĕпе ответсăрлăх пулса тăрать, волокита тата партипе государство дисциплинине пăсни саралать. Решенисене пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе лайăхлатса пырса, партин вырăнти организацийĕсен партипе правительство решенийĕсем çине формальнă пăхнине татăклăнах пĕтермелле, коммунистсене ĕçри çитменлĕхсене тӳссе тăман çынсем пулма вĕрентмелле.

Парти органĕсен парти организацийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн яланах тимлĕн тăрăшмалла. Парти организацийĕсем çирĕп, кĕрешме пултаракан тата авторитетлă пулсан çеç партипе правительство решенийĕсене ăнăçлăн пурнăçласа пыма май пулать. Çав вăхăтрах парти комитечĕсем чылай чухне парти организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, вĕсен кулленхи ĕçне ертсе пымаççĕ, обком, хула комитечĕ, райком кулленкун туса пымалли ĕç парти организацийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн кĕрешесси, вĕсем массăсемпе çыхăнса тăнине сарса пырасси, вĕсем хуçалăхпа политикăллă задачăсене пурнăçлассишĕн ответ тытассине ӳстерсе пырасси пулнине манса каяççĕ.

Илес, сăмахран, партин Чита обкомне. Вăл парти райкомĕсен ĕçне тивĕçлипе ертсе пымасть. Обком пур чухне те парти организацийĕсен ĕçĕпе пĕр-пĕр кампани ирттернĕ май кăна е ĕç ăнăçсăр пулни палăрсан тин интересленет. Çавна пула ĕнтĕ обком нумай пулмасть партин Улетовски райкомĕ ĕçре пысăк йăнăшсем тата çитменлĕхсем тунипе тĕл пулнă. Ку районта ялхуçалăх артелĕн Уставне пысăккăн пăснă, хуçалăха тата партиллĕ-политикăллă ĕçе ертсе пырас енĕпе пысăк çитменлĕхсем пулнă. Çак районта обком, облисполком тата облаçри ялхуçалăх управленийĕн работникĕсем нумай хут пулнă. Анчах вĕсем ĕç мĕнле тăнине тĕплĕн сăнаса вĕренмен, çавăнпа маларах асăннă фактсене уçса палăртайман.

Обкомсен, крайкомсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсен партин вырăнти организацийĕсенче ĕç мĕнле пынине кулленкун сăнаса тăмалла, вĕсен ĕçĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тухмалла, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăнмалла. Çак ĕçе тунă чухне парти организацийĕсен ĕççесене пĕр-пĕр кампани ирттернĕ чухне уйрăм заданисене мĕнле пурнăçланине палăртма кăна тĕрĕслени çителĕксĕр, вĕсен пĕтĕм ĕçĕ мĕнле пулса пынине тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла, ĕç мĕнле тăнине тĕплĕн палăртмалла, кашни район малашне мĕнле ĕçлесе пымаллине, вĕсен экономикинчи уйрăмлăхсене лайăх пĕлсе тăмалла.

Коммунистсен партийĕ яланах: организациллĕ ĕç партин политикăллă задачисене пурнăçа кĕртме май туса памалла, тесе шутланă. Партиллĕ-организациллĕ ĕçе лайăхлатса, хуçалăхпа культурăн мĕнпур облаçĕсене ертсе пымалли майсене лайăхлатса пырса парти организацийĕсем Ленин—Сталин партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисене пурнăçлас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕç.

(«ПРАВДА» хаçатăн умстатьи, 1953 çулхи февралĕн 26-мĕшĕ).

Чăваш АССР-ĕнчи ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйланин итогĕсем

1. Мĕнпур 891 суйлав участокĕсенчи суйлав комиссийĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш республикинчи ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавĕнче суйлавçăсенчен 99,96 проценчĕ сасăлама хутшăннă. Сасăлама хутшăннă мĕнпур суйлавçăсенчен 98,09 проценчĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă.

2. Ĕççынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен суйлавĕнче регистрациленĕ мĕнпур суйлавçăсенчен 99,97 проценчĕ сасăлама хутшăннă. Мĕнпур 908 округра сасăлама хутшăннă пĕтĕм суйлавçăсенчен 98,70 проценчĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă. Мĕнпур суйлавçăсенчен 1,30 проценчĕ депутата суйламалли кандидатсене хирĕç сасăланă.

«Чăваш АССР ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйламалли Положенин» 89-мĕш статьи тăрăх, 9 бюллетене тĕрĕс мар тесе шутланă.

3. Ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсен суйлавĕ енĕпе:

а) республикăна пăхăнса тăракан хуласенче — суйлавçăсенчен 99,94 проценчĕ сасăлама хутшăннă. Мĕнпур 341 суйлав округĕнче суйлавçăсенчен 98,72 проценчĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă. Суйлавçăсен 1,28 проценчĕ депутата суйламалли кандидатсене хирĕç сасăланă.

б) районсене пăхăнса тăракан хуласенче—суйлавçăсенчен 99,98 проценчĕ сасăлама хутшăннă. Мĕнпур 165 суйлав округĕнче суйлавçăсен 98,7 проценчĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă. Суйлавçăсен 1,30 проценчĕ депутата суйламалли кандидатсене хирĕç сасăланă.

4. Ĕççынни депутачĕсен ял Совечĕсен суйлавĕнче суйлавçăсенчен 99,96 проценчĕ сасăлама хутшăннă. 8.356 суйлав округĕнче суйлавсем пулнă. Çак мĕнпур округсенче суйлавçăсенчен 97,27 проценчĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă. Суйлавçăсенчен 2,73 проценчĕ депутата суйламалли кандидатсене хирĕç сасăланă. 3 бюллетене тĕрĕс мар тесе шутланă. Виçĕ суйлав округĕнче суйлава тепĕр вăхăта куçарнă.

5. Ĕççынни депутачĕсен поселок Совечĕсен суйлавĕнче суйлавçăсен 99,93 проценчĕ сасăлама хутшăннă. Мĕнпур 263 суйлав округĕнче суйлавçăсен 98,55 проценчĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă. Суйлавçăсенчен 1,45 проценчĕ депутата суйламалли кандидатсене хирĕç сасăланă.

Ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйланă депутатсем пурте коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсем.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен суйлав комиссийĕ ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче суйланин итогĕсем çинчен

ПĔЛТЕРНИ

Хулари суйлав комиссийĕ ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче суйлани çинчен пĕлтерет.

1953 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче 13 сехет тĕлне Шупашкар хулинчи суйлав комиссийĕ округсенчи суйлав комиссийĕсенчен ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне суйланин результачĕсем çинчен пĕлтернисене илнĕ, çав пĕлтерӳсене мĕнпур 31 участокри суйлав комиссийĕсем пĕлтерни тăрăх туса хатĕрленĕ.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутатсем суйлама мĕнпур суйлавçăсенчен 99,9 проценчĕ хутшăннă.

Мĕнпур 188 суйлав округĕнче сасăлама хутшăннă пĕтĕм суйлавçăсенчен 98,74 проценчĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăланă. Сасăлама хутшăннă мĕнпур суйлавçăсенчен 1,26 процент депутата суйламалли кандидатсене хирĕç сасăланă.

Шупашкар хулинчи суйлав комиссийĕ, «Чăваш АССР ĕççынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйламалли Положенин» 36-мĕш статьи тăрăх, кашни суйлав округĕнчен илнĕ материалсене пăхса тухса, Шупашкар хулинчи мĕнпур 188 суйлав округĕнче ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне суйланă депутатсене регистрациленĕ.

Суйланă депутатсем пурте коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем.

ĔÇÇЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕТНЕ СУЙЛАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН ХУЛАРИ СУЙЛАВ КОМИССИЙĔ.

Çуракине тĕплĕн хатĕрленер!

* * *

Вăйлă тырпулшăн кĕрешме хатĕр

Йĕпреç МТС-ĕнчи механизаторсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисем юсамалли плана ĕççыни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйламалли кун тĕлне тултарма обязательство илнĕччĕ. Механизаторсем хăйсен социализмлă обязательствисене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешрĕç. Юсав ĕçĕсене ĕç тухăçлăхне хăпартма май паракан узловой меслетпе йĕркелесе, трактор бригадисем, мастерскойри рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту вăйлă сарса, МТС февралĕн 21-мĕшĕ тĕлне тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсамалли плана ăнăçлă тултарчĕ. 48 трактор, 40 плуг, 27 культиватор тата çĕрĕçĕн ытти хатĕрĕсене пурне те юсаса лартрĕ. Юсанă тракторсемпе машинăсене çитес кунсенче колхозсене илсе каяççĕ.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене хăвăрт тата тĕплĕн юсама лайăх хатĕрленни пулăшрĕ. Мастерской иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнчех тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене узловой меслетпе юсама хатĕрленсе çитнĕ. Токарнăй станоксем 4, сверлильнăй станоксем 2, хупăлакан тата якатакан станоксем 2, сивĕпе вĕри обкадка тумалли стендсем вырнаçтарса лартнă, инструментсемпе ытти оборудовани çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Тракторсене хăвăртрах тата лайăхрах юсас тĕлĕшпе ăмăртура 5-мĕш, 6-мĕш, 7-мĕш тата 12-мĕш трактор бригадисем паха тĕслĕхсем кăтартса парчĕç. 1-мĕш бригадăри В. Семеновăпа К. Пашкова трактористкăсем, 4-мĕш бригадăри В. Андреев, Я. Абрамов, Е. Данилов трактористсем уйрăммăнах лайăх ĕçлерĕç. Аслă токарь Федоров, 2-мĕш узел бригадирĕ Аркаев, механик-контролер Новиков комсомолецсем кулленхи ĕç нормине 200-шер процент таран тултарса пычĕç.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене çуракине тухма хатĕрлесе çитернипе пĕрлех, МТС бригадисем районти колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ. «Большевик» колхозра С. Морковкин тракторист уй-хире тислĕк турттарать. Н. Шальтямов юлташ ертсе пыракан бригадăри механизаторсем Молотов ячĕпе тăракан колхоз уй-хирне 120 тонна тислĕк кăларса панă. 9-мĕш бригадăри механизаторсем Молотов ячĕпе тăракан колхоза 80 тонна, Калинин ячĕпе тăракан колхоза 120 тонна тырă тасатса панă. Ку ĕçе механизаторсем малалла тăваççĕ.

Трактористсемпе трактористкăсем кăçалхи çуракинче кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 500 гектар чухлĕ çĕрĕç тума сăмах параççĕ.

МТС çултан-çул хăватлă çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Иртнĕ çулта МТС ДТ-54 маркăллă тракторсем, самоходнăй комбайнсем, культиваторсем, сеялкăсем, вăрлăх тасатмалли машинăсем тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай илнĕ. Çак кунсенче çĕнĕрен 12 трактор плугĕ, 9 самоходнăй комбайн тата çĕнĕ йышши сеялкăсем килмелле.

Тăван çĕршыв ялхуçалăхне парса тăракан хăватлă техникăпа туллин усă курма пĕлекен кадрсем нумай кирлĕ пулаççĕ. МТС çумĕнче трактористсем вĕрентсе кăларакан курс уçнăччĕ. Халĕ çав курс хăйĕн ĕçне ăнăçлă вĕçлерĕ. Курсран 31 колхозник вĕренсе тухрĕç, вĕсем кăçал трактористсем пулса ĕçлеççĕ. Кашни механизаци шкулĕнче 20 çын тракторист пулма, 14 çын комбайнер пулма вĕренеççĕ.

МТС-ри механизаторсем кăçалхи çул кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă ӳстерсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Н. ПАВЛОВ.
Г. РУСАНОВ.

Вăрлăх çинчен шухăшламан çĕрте

ИШЛЕЙ. Ялхуçалăх культурисен тухăçĕ вăрлăх пахалăхĕнчен нумай килет. Районти вунвиçĕ колхоз çураки валли вăрлăх çителĕклĕ уйăрса хунă. «Знамя труда», Ленин ячĕпе, Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсем вăрлăхсене акма юрăхлă тунă. Анчах та вăрлăх хатĕрлес тата вăрлăх пахалăхĕшĕн кĕрешес ĕçе пур колхозсенче те кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. Вăрлăх тупса хурас, ăна сортласа тасатса хатĕрлес ĕçре колхоз руководителĕсем хăйсен ответлăхне туймаççĕ.

«Знамя коммунизма» колхозăн кантăр вăрлăхĕ 40 центнер, сурхи тулă 27 центнер, нумай çул ӳсекен курăксен вăрри 10 центнер, вир 2,4 центнер çитмест. Кунта хатĕрлесе хунă вăрлăха та кирлĕ пек упрамаççĕ. Вăрлăхлăх уйăрнă тырă нӳрĕ, ăна тасатма тытăнман. Çавна пула вăрлăхĕсем хĕрме пуçланă. Тырă тасатакан машинăсем колхозра пур, анчах вĕсемпе усă курмаççĕ, МТС машинисемпе сортласа шанса лараççĕ. МТС агрономĕсем те районти колхозсене тырă сортласа парас тĕлĕшпе ытла та саврăнăçусăр ĕçлеççĕ. «За коммунизм» колхозра МТС сортировки иртнĕ çултанпах ларать, анчах вăрлăх сортлас ĕçе организацилемен. «Сталинская гвардия» колхозра та МТС-ăн паха машини тахçантанпах ахалех ларать. Тырă тасатакан машинăсемпе усă курманни, нумай колхозсем ку ĕçре ытла та кая юлса пыни район руководителĕсене халĕ те хумхантармасть-ха.

Вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен инспекци тĕрĕслесе пăхнă вăрлăхсенчен сурри ытла акма юрăхсăр,—вăрлăх тасатмалла, шăтас пахалăхне ӳстермелле. Ку ĕçе МТС агрономĕсен пулăшас пулать.

Вăрлăх хатĕрлес ĕçри тимсĕрлĕхе халех пĕтермелле. Колхозсенче вăрлăхлăх тырра тасатас ĕçе организацилемелле.

И. МИХАЙЛОВ,
вăрлăх пахалăхне тĕрĕслекен районти госинспекцин начальникĕ.

Йĕтĕнпе кантăр тухăçне ӳстерессишĕн

Республикăри йĕтĕн тата кантăр туса илес ĕçре малта пыракансен социализмлă обязательствисене тата вĕсем хăйсен ĕçĕ çинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçат урлă кăласа панине вуланă хыççăн, эпир те техникăллă культурăсене пысăк тухăçлă туса илессишĕн кĕрешме социализмлă ăмăртăва хутшăнма йышăнтăмăр.

Кăçал пирĕн колхозăн 32 гектар кантăр акмалла. Малта пыракансен опытне шута илсе, кантăра иртерех акса хăвармăпăр. Халĕ эпир кантăр вăррине сортласа хутăмăр. Кантăр акмалли вырăна 6 пин лав ытла тислĕк кăлартăмăр. 30 центнер кĕл пухса хатĕрлерĕмĕр.

А. ЧЕРНОВ,
Жданов ячĕпе тăракан колхоз агротехникĕ.
Етĕрне районĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне 1953 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче суйланă депутатсен СПИСОКĔ

Георгий Платонович **Платонов**—1-мĕш суйлав округĕ.
Иван Филиппович **Филиппов**—2-мĕш суйлав округĕ.
Анна Степановна **Шорникова**—3-мĕш суйлав округĕ.
Павел Лаврентьевич **Лебедев**—4-мĕш суйлав округĕ.
Григорий Иванович **Калинцев**—5-мĕш суйлав округĕ.
Николай Федорович **Пойда**—6-мĕш суйлав округĕ.
Иван Васильевич **Благодатских**—7-мĕш суйлав округĕ.
Константин Петрович **Горюнов**—8-мĕш суйлав округĕ.
Ксения Васильевна **Васильева**—9-мĕш суйлав округĕ.
Раиса Лаврентьевна **Телегина**—10-мĕш суйлав округĕ.
Андриан Васильевич **Киселев**—11-мĕш суйлав округĕ.
Виталий Степанович **Степанов**—12-мĕш суйлав округĕ.
Анна Васильевна **Степанова**—13-мĕш суйлав округĕ.
Сергей Васильевич **Букетов**—14-мĕш суйлав округĕ.
Евдокия Осиповна **Осипова**—15-мĕш суйлав округĕ.
Константин Петрович **Ладин**—16-мĕш суйлав округĕ.
Александр Михайлович **Токарев**—17-мĕш суйлав округĕ.
Иван Васильевич **Сиднев**—18-мĕш суйлав округĕ.
Клавдия Борисовна **Деева**—19-мĕш суйлав округĕ.
Лидия Александровна **Мышкина**—20-мĕш суйлав округĕ.
Мария Дмитриевна **Лупанова**—21-мĕш суйлав округĕ.
Анна Степановна **Ягодкина**—22-мĕш суйлав округĕ.
Лина Николаевна **Жукова**—23-мĕш суйлав округĕ.
Порфирий Николаевич **Кожендаев**—24-мĕш суйлав округĕ.
Михаил Михайлович **Михайлов**—25-мĕш суйлав округĕ.
Антонина Федоровна **Федорова**—26-мĕш суйлав округĕ.
Клавдия Яковлевна **Гаранина**—27-мĕш суйлав округĕ.
Клавдия Александровна **Арзамасова**—28-мĕш суйлав округĕ.
Вениамин Дмитриевич **Алфер**—29-мĕш суйлав округĕ.
Николай Николаевич **Бобров**—30-мĕш суйлав округĕ.
Вера Федоровна **Симонова**—31-мĕш суйлав округĕ.
Мария Петровна **Дерстуганова**—32-мĕш суйлав округĕ.
Борис Алексеевич **Алексеев**—33-мĕш суйлав округĕ.
Евгений Алексеевич **Токмаков**—34-мĕш суйлав округĕ.
Августа Моисеевна **Спиридонова**—35-мĕш суйлав округĕ.
Клавдия Петровна **Ишмуратова**—36-мĕш суйлав округĕ.
Евгения Григорьевна **Тарасова**—37-мĕш суйлав округĕ.
Исаак Ильич **Ильин**—38-мĕш суйлав округĕ.
Маргарита Васильевна **Васильева**—39-мĕш суйлав округĕ.
Таисия Ивановна **Иванова**—40-мĕш суйлав округĕ.
Серафима Романовна **Ершова**—41-мĕш суйлав округĕ.
Александр Сергеевич **Старостин**—42-мĕш суйлав округĕ.
Михаил Степанович **Степанов**—43-мĕш суйлав округĕ.
Юлия Петровна **Сапожникова**—44-мĕш суйлав округĕ.
Александр Федосеевич **Бекренев**—45-мĕш суйлав округĕ.
Клавдия Степановна **Мефодьева**—46-мĕш суйлав округĕ.
Петр Иванович **Захаркин**—47-мĕш суйлав округĕ.
Иван Данилович **Андрюшкин**—48-мĕш суйлав округĕ.
Александр Семенович **Каплин**—49-мĕш суйлав округĕ.
Николай Алексеевич **Шмаков**—50-мĕш суйлав округĕ.
Николай Николаевич **Никитин**—51-мĕш суйлав округĕ.
Галина Николаевна **Филиппова**—52-мĕш суйлав округĕ.
Николай Алексеевич **Байков**—53-мĕш суйлав округĕ.
Вера Ефимовна **Ефимова**—54-мĕш суйлав округĕ.
Варвара Александровна **Прокопьева**—55-мĕш суйлав округĕ.
Анатолий Иванович **Иванов**—56-мĕш суйлав округĕ.
Александр Иванович **Кассиров**—57-мĕш суйлав округĕ.
Нина Егоровна **Карпова**—58-мĕш суйлав округĕ.
Кирилл Андреевич **Андреев**—59-мĕш суйлав округĕ.
Вера Ивановна **Козлова**—60-мĕш суйлав округĕ.
Валентина Сергеевна **Сергеева**—61-мĕш суйлав округĕ.
Тамара Михайловна **Таранова**—62-мĕш суйлав округĕ.
Ольга Ивановна **Ырзем**—63-мĕш суйлав округĕ.
Антонина Трофимовна **Сорокина**—64-мĕш суйлав округĕ.
Вера Ивановна **Лебедева**—65-мĕш суйлав округĕ.
Перасковья Емельяновна **Емельянова**—66-мĕш суйлав округĕ.
Александра Ивановна **Андреева**—67-мĕш суйлав округĕ.
Леонид Хрисанфович **Михайлов**—68-мĕш суйлав округĕ.
Петр Иванович **Иванов**—69-мĕш суйлав округĕ.
Алексей Васильевич **Морсков**—70-мĕш суйлав округĕ.
Павел Никитич **Денисов**—71-мĕш суйлав округĕ.
Екатерина Филипповна **Иванова**—72-мĕш суйлав округĕ.
Агафья Кузьминична **Кузьмина**—73-мĕш суйлав округĕ.
Вера Семеновна **Тазова**—74-мĕш суйлав округĕ.
Георгий Наумович **Кулешов**—75-мĕш суйлав округĕ.
Мария Алексеевна **Алексеева**—76-мĕш суйлав округĕ.
Вера Петровна **Краснова**—77-мĕш суйлав округĕ.
Прохор Трофимович Трофимов—78-мĕш суйлав округĕ.
Нина Михайловна **Петрова**—79-мĕш суйлав округĕ.
Александра Ивановна **Орешкина**—80-мĕш суйлав округĕ.
Константин Евлампьевич **Евлампьев**—81-мĕш суйлав округĕ.
Зинаида Васильевна Буркина—82-мĕш суйлав округĕ.
Василий Петрович **Сергеев**—83-мĕш суйлав округĕ.
Фекла Дмитриевна **Дмитриева**—84-мĕш суйлав округĕ.
Антонина Васильевна **Черпакова**—85-мĕш суйлав округĕ.
Константин Никифорович **Халимонец**—86-мĕш суйлав округĕ.
Николай Иванович **Чунаев**—87-мĕш суйлав округĕ.
Николай Григорьевич **Шувалов**—88-мĕш суйлав округĕ.
Клавдия Александровна **Александрова**—89-мĕш суйлав округĕ.
Андрей Васильевич **Кузнецов**—90-мĕш суйлав округĕ.
Анна Артемьевна **Артемьева**—91-мĕш суйлав округĕ.
Николай Сергеевич **Татаркин**—92-мĕш суйлав округĕ.
Тимофей Аркадьевич **Ахазов**—93-мĕш суйлав округĕ.
Валентина Митрофановна **Митрофанова**—94-мĕш суйлав округĕ.
Николай Иванович **Кириллов**—95-мĕш суйлав округĕ.
Борис Иванович **Хватов**—96-мĕш суйлав округĕ.
Мария Матвеевна **Усачева**—97-мĕш суйлав округĕ.
Валентина Степановна **Барабанова**—98-мĕш суйлав округĕ.
Иван Данилович **Данилов**—99-мĕш суйлав округĕ.
Людмила Александровна **Солина**—100-мĕш суйлав округĕ.
Сергей Васильевич **Васильев**—101-мĕш суйлав округĕ.
Павел Семенович **Семенов**—102-мĕш суйлав округĕ.
Евдокия Степановна **Степанова**—103-мĕш суйлав округĕ.
Иван Федорович **Федоров**—104-мĕш суйлав округĕ.
Георгий Александрович **Ионов**—105-мĕш суйлав округĕ.
Михаил Данилович **Шумилов**—106-мĕш суйлав округĕ.
Анна Дмитриевна **Буркова**—107-мĕш суйлав округĕ.
Николай Алексеевич **Мамонтов**—108-мĕш суйлав округĕ.
Филипп Миронович **Лукин**—109-мĕш суйлав округĕ.
Павел Викторович **Попов**—110-мĕш суйлав округĕ.
Алексей Кузьмич **Кузьмин**—111-мĕш суйлав округĕ.
Василий Яковлевич **Яковлев**—112-мĕш суйлав округĕ.
Зинаида Александровна **Давыдова**—113-мĕш суйлав округĕ.
Наталия Матвеевна **Матвеева**—114-мĕш суйлав округĕ.
Иван Осипович **Ефремов**—115-мĕш суйлав округĕ.
Ирина Семеновна **Тимошкина**—116-мĕш суйлав округĕ.
Николай Федотович **Федотов**—117-мĕш суйлав округĕ.
Иван Васильевич **Заикин**—118-мĕш суйлав округĕ.
Алексей Васильевич **Протопопов**—119-мĕш суйлав округĕ.
Наталия Николаевна **Рыбакова**—120-мĕш суйлав округĕ.
Николай Дмитриевич **Волков**—121-мĕш суйлав округĕ.
Георгий Васильевич **Шапошников**—122-мĕш суйлав округĕ.
Аркадий Данилович **Данилов**—123-мĕш суйлав округĕ.
Василий Фадеевич **Тарасов**—124-мĕш суйлав округĕ.
Филипп Павлович **Суслин**—125-мĕш суйлав округĕ.
Афанасий Алексеевич **Алексеев**—126-мĕш суйлав округĕ.
Георгий Васильевич **Николаев**—127-мĕш суйлав округĕ.
Иван Ильич **Куприянов**—128-мĕш суйлав округĕ.
Сергей Николаевич **Дмитриев**—129-мĕш суйлав округĕ.
Нина Ильинична **Винокурова**—130-мĕш суйлав округĕ.
Андрей Ильич **Русаков**—131-мĕш суйлав округĕ.
Нина Ефимовна **Удикова**—132-мĕш суйлав округĕ.
Зоя Васильевна **Шигаева**—133-мĕш суйлав округĕ.
Максим Алексеевич **Шарко**—134-мĕш суйлав округĕ.
Рафаил Афанасьевич **Осанов**—135-мĕш суйлав округĕ.
Иван Максимович **Васькин**—136-мĕш суйлав округĕ.
Вера Васильевна **Ковалева**—137-мĕш суйлав округĕ.
Мария Семеновна **Миролюбова**—138-мĕш суйлав округĕ.
Юлия Кирилловна **Кириллова**—139-мĕш суйлав округĕ.
Иван Алексеевич **Захарцев**—140-мĕш суйлав округĕ.
Павел Дмитриевич **Дмитриев**—141-мĕш суйлав округĕ.
Екатерина Тимофеевна **Тимофеева**—142-мĕш суйлав округĕ.
Александр Семенович **Туликов**—143-мĕш суйлав округĕ.
Дмитрий Никитич **Полукаров**—144-мĕш суйлав округĕ.
Сабира Назыровна **Хаирова**—145-мĕш суйлав округĕ.
Семен Иванович **Иванов**—146-мĕш суйлав округĕ.
Мария Федоровна **Мерентяева**—147-мĕш суйлав округĕ.
Илларион Афанасьевич **Афанасьев**—148-мĕш суйлав округĕ.
Зоя Ананьевна **Андреева**—149-мĕш суйлав округĕ.
Вениамин Пантелеевич **Совенко**—150-мĕш суйлав округĕ.
Михаил Павлович **Горбунов**—151-мĕш суйлав округĕ.
Елизавета Алексеевна **Алексеева**—152-мĕш суйлав округĕ.
Галина Ивановна **Иванова**—153-мĕш суйлав округĕ.
Александра Полуэктовна **Котова**—154-мĕш суйлав округĕ.
Лидия Анатольевна **Самохвалова**—155-мĕш суйлав округĕ.
Сергей Миронович **Миронов**—156-мĕш суйлав округĕ.
Нина Ивановна **Соломина**—157-мĕш суйлав округĕ.
Надежда Владимировна **Степанова**—158-мĕш суйлав округĕ.
Константин Павлович **Кошелев**—159-мĕш суйлав округĕ.
Александр Иванович **Киндулин**—160-мĕш суйлав округĕ.
Александр Прокопьевич **Прокопьев**—161-мĕш суйлав округĕ.
Петр Григорьевич **Гавриков**—162-мĕш суйлав округĕ.
Полина Ивановна **Попова**—163-мĕш суйлав округĕ.
Серафима Петровна **Иванова**—164-мĕш суйлав округĕ.
Петр Александрович **Зубов**—165-мĕш суйлав округĕ.
Никита Петрович **Енчиков**—166-мĕш суйлав округĕ.
Нина Андрияновна **Андриянова**—167-мĕш суйлав округĕ.
Евгения Александровна **Нестерова**—168-мĕш суйлав округĕ.
Алефтина Павловна **Бутыльченко**—169-мĕш суйлав округĕ.
Михаил Капитонович **Кожаков**—170-мĕш суйлав округĕ.
Никандр Иванович **Грибов**—171-мĕш суйлав округĕ.
Александр Павлович **Швечков**—172-мĕш суйлав округĕ.
Петр Васильевич **Егоров**—173-мĕш суйлав округĕ.
Людмила Алексеевна **Алексеева**—174-мĕш суйлав округĕ.
Александр Григорьевич **Старостин**—175-мĕш суйлав округĕ.
Евгений Архипович **Никитин**—176-мĕш суйлав округĕ.
Николай Донатович **Хорьков**—177-мĕш суйлав округĕ.
Григорий Трофимович **Трофимов**—178-мĕш суйлав округĕ.
Вера Дмитриевна Семенова—179-мĕш суйлав округĕ.
Варвара Тимофеевна **Вастеева**—180-мĕш суйлав округĕ.
Виктор Николаевич **Гурьянов**—181-мĕш суйлав округĕ.
Николай Иванович **Игнатьев**—182-мĕш суйлав округĕ.
Вера Даниловна **Емерова**—183-мĕш суйлав округĕ.
Сергей Яковлевич **Гаврилов**—184-мĕш суйлав округĕ.
Фаддей Степанович **Цветков**—185-мĕш суйлав округĕ.
Петр Игнатьевич **Игнатьев**—186-мĕш суйлав округĕ.
Маргарита Андреевна **Гаврилова**—187-мĕш суйлав округĕ.
Ефим Антонович **Антонов**—188-мĕш суйлав округĕ.

Шупашкар хулинчи суйлав комиссийĕ

Депутатсене удостоверени пани

Февралĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарти 69-мĕш округри суйлав комиссийĕн юлашки ларăвĕ пулчĕ.

— Паян пирĕн ларура пĕр ыйту тăрать,—терĕ ларăва уçса комисси председателĕ И. Филиппов юлташ,—хула Советне суйланнă депутата П. И. Иванов юлташа ăна суйлани çинчен удостоверени парасси. Пирĕн округра суйлав пысăк ăнăçлăхпа иртрĕ. 193 суйлавçăран пурте, çĕр процентчĕпех, Петр Иванович Иванов юлташшăн сасăларĕç.

П. И. Иванов депутат пĕрремĕш типографире инструктор-линотипист пулса ĕçлет. Вăл, ăна депутата суйлани çинчен пĕлтерекен удостоверение илнĕ чухне, кĕске сăмах тухса каларĕ.

В. ТЕРЕНТЬЕВ.

Февралĕн 24-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи 67-мĕш округри суйлав комиссийĕ хула Советне çав округран суйланнă Александра Ивановна Андреева депутата удостоверени пачĕ.

Комисси председателĕ С. В. Васильев юлташ удостоверени парас умĕн Андреева юлташа депутата суйланнă ятпа саламласа каларĕ.

М. ФАДЕЕВА.

Савăнăçлă пурнăçшăн

ВĂРМАР. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çыр ялĕн урамĕсенче, обществăллă çуртсем çинче—партипе правительство руководителĕсен портречĕсем, хĕрлĕ ялавсем.

Чылай суйлавçăсем февралĕн 22-мĕшĕнче ирех вăранса суйлав участокне пычĕç.

Малтанхи бюллетеньсене ялти ватă колхозник С. Изватов юлташ илсе, çапла каларĕ:

— Эпĕ Октябрьти революциччен ырă пурнăç курман, асаппа нуша тӳссе пурăннă. Телей шыраса Россия тăрăх сахал мар çӳренĕ. Совет влаçĕ кăна телейлĕ те тулăх пурнăç туса пачĕ. Çак кун-çула пире Ленинпа Сталин, Коммунистсен партийĕ туса пачĕç.

Хĕрлĕ Çырти «Хĕрлĕ Кĕтне» колхозри колхозниксен пурнăç условийĕсем лайăхланса пыраççĕ. Колхоз çулсерен вăйлă тырпул туса илет, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă, выльăхран илекен тупăш та ӳссех пырать.

Кашни килтех Ильич лампочки çунать, радио калаçать, хаçат-журнал пур. Кăçал ялта водопровод туни колхозниксен пурнăçне чылай лайăхлатрĕ.

Кунти суйлавçăсем суйлава активлăн хутшăнчĕç.

И. ВОЛКОВ.

Çирĕп миршĕн

МУРКАШ. (Телефонпа). Пашалукассинчи суйлавçăсем ялти клуба ирех пухăнма пуçларĕç.

Малтанхи бюллетене илсе, «Красный Октябрь» колхоз членĕ 60 çулхи А. Петров колхозник хăйĕн тивĕçне пурнăçлать.

Çамрăк суйлавçă Семенов бюллетене суйлав ещĕкне ярса çапла каларĕ:

— Эпĕ Тăван çĕршыв чечеклентĕр, пуянлантăр тесе сасăлатăп. Халăхсем текех вăрçă хăрушлăхне ан курччăр. Океан леш енчи çынçиенсем атом бомбипе хăратни пире хăрушă мар. Пирĕн сасă атом бомбинчен вăйлăрах. Эпир миршĕн сасăлатпăр.

10 сехет тĕлне кунти 535 суйлавçăран 480 суйлавçă сасăларĕ. 11 сехет тĕлне пур суйлавçăсем те хăйсен тивĕçне пурнăçларĕç.

П. СЕМЕНОВ.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан промысла артелĕнчи стахановка М. А. Румянцева юлташ. Вăл ĕç нормине кулленех 150 процент тултарать. Февралĕн 22-мĕшĕнче М. А. Румянцева юлташа Вăрмар поселок Советне депутата суйланă.

А. КОСТИН фотоӳкерчĕкĕ.

Колхозлă ялăн пĕр кунхи почти

Кăнтăрла тĕлĕнче Елизавета Волкова Уравăшри сыхăну уйрăмĕ умне çитрĕ. Вăл район центрĕнчи сыхăну уйрăмĕнчен колхозлă ялăн пĕр кунхи почтине илсе килнĕ.

Сыхăну уйрăмĕн начальникĕ Г. Федоров çĕнĕ почтăна ялсенчи письмоносецсене валеçсе парать.

— Пăхăпăр, мĕн илсе килнĕ паянхи почта Киров ячĕпе тăракан колхозлă ял ĕçченĕсем валли?

— Акă, Мускавра тата хамăр республикăра тухса тăракан хаçатсем: «Правда», «Социалистическое земледелие», «Учительская газета», «Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия» тата ыттисем те, пурĕ 295 экземпляр; «Колхозное производство», «Новый мир», «Дружба народов», «Ялав» тата ытти журналсем, пурĕ 120 экземпляр. Çырусем нумай. Пурĕ 90 çыру килнĕ. Вĕсене колхозлă ялта ӳссе çитĕннĕ, халĕ тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлекенсем, вĕренекенсем, заводсемпе предприятисенчен, стройкăсенчен, институтсемпе техникумсенчен, Совет Çарĕнчен çыраççĕ.

Ю. Филиппов Свердловскри сăрт-ту институтĕнчен, В. Портнов, П. Бородавкин, В. Филиппов çамрăксем — сăрт-ту техникумĕсенчен, А. Коновалова—Мускаври çӳлĕ çуртсем тунă çĕртен, Е. Колыменский, Ф. Семенов, И. Медведев, И. Петров офицерсем—Совет Çарĕнчен çыраççĕ.

— Хамăр ялтан тухнă çынсен çырăвĕсене курсан чун савăнать, эпĕ вĕсене адрессем тăрăх савăнсах валеçсе паратăп,— тет колхоз письмоносецĕ çырусене сăран сумкăна тирпейлĕн майласа хурса.

Паянхи почтăпа пĕччен тата нумай ача амăшĕсем валли укçа килнĕ. Вĕсене валеçсе памалла.

Паянхи почтăпа посылкăсемпе бандерольсем килмен. Тепĕр чухне нумай пулаççĕ вĕсем. Колхозниксем почтăпа Мускавран тата Шупашкартан тĕрлĕрен литература, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, лампăллă радиоприемниксем, фотоаппаратсем тата ытти тĕрлĕ культура таварĕсем те çырăнса илеççĕ.

Е. ЗАХАРОВ.

Вăрнар районĕ.

Шкулти лектори

Етĕрне районĕнчи Палтайри вăтам шкулта кăçалхи вĕренӳ çулĕнче лектори организациленĕ. Лектори план тăрăх ĕçлет. Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çур çулĕнче 12 хутчен лекцисемпе докладсем иртернĕ. Ĕççыннисем «Америкăри империалистсем — çĕнĕ вăрçă чĕртме хатĕрленекенсем», «Çамрăксене коммунистла воспитани парасси», «Туслăхпа юлташлăх», «Вырăссен паллă писателĕ Н. А. Некрасов», «Сталинла аслă Конституци» тата ытти темăсем тăрăх вуланă лекцисене уйрăмах юратса итленĕ.

Шкулта вĕренекенсем валли кашни шăматкун политинформаци пулать. Политинформацисене 8—10-мĕш классенче вĕренекенсем иртереççĕ. Вĕсене класс руководителĕсем докладсемпе калаçусем иртермелли плансене малтанах парса хураççĕ. Çав плансем тăрăх вĕренекенсем кĕске конспектсем çырса хатĕрлеççĕ. Çакăн пек туни вĕренекенсене хаçатсемпе тата журналсемпе ĕçлеме, аудитори умĕнче тухса калама чылай пулăшать.

Г. МУРЗЕЕВ.

Обязательствăсене пурнăçласа

КӲКЕÇ. Суворов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ государствăна кантăр вăрри памалли плана пурнăçларĕ. Колхоз кантăр вăрри панăшăн государствăран 1.200 килограмм тулă тата укçа илчĕ.

Кăçал колхозăн 10 гектар çине кантăр акмалла. Халĕ 1.800 килограмм вăрлăх тасатса хатĕрленĕ.

Колхоз çавăн пекех 2.102 килограмм аш-какай парса кăçалхи обязательствăна 69 процент пурнăçларĕ.

Н. МУРАВЬЕВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партиллĕ ĕçе планласси çинчен

Партиллĕ ĕçе, ытти кирек епле ĕç пекех, плансăр туса пыма çук. Парторганизаци хăй умĕнче тăракан задачăсене тата малашне мĕнле ыйтусем лартса сӳтсе явмаллине пĕлмест пулсан, партиллĕ ĕçĕн ăнăçлăхĕ пирки сăмах та пулма пултараймасть. Ун пек парторганизаци пурпĕрех чи кирлине манса хăварать.

Тĕплĕн шухăшласа тунă план парти вăйне тĕрĕс вырнаçтарма, тĕп мероприятисене вăхăтра пурнăçа кĕртме май парать. План руководителе тата кашни коммуниста дисциплинăна пăхăнма вĕрентет, йышăннă решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслес ĕçе пĕлсе йĕркелеме пулăшать.

Практика çакна кăтартса парать: КПСС райкомĕ плансăр ĕçлеме тытăнать пулсан, вăл умрине витĕр курма пăрахать, хăшпĕр чухне районти пĕтĕм парторганизацисен ĕçне пĕрлештерсе çул кăтартса пыракан, вĕсен ĕçне контроллесе тăракан орган пулас вырăнне, пĕчĕк ведомствăллă аппарат пулса тăма пултарать. Кун пек çитменлĕхсем пирĕн райком ĕçĕнче те пулнă. Ун çинчен районти парторганизацин иртнĕ конференцийĕнче те кăтартса пачĕç.

КПСС райкомĕн ĕçне, ун ĕç меслетне урăхлатса çĕнетнĕ май, эпир организациллĕ ыйтăвăн питех те кирлĕ пайĕ пулса тăракан ĕç çине—план тăвасси çине тимлĕ пăхатпăр. Халĕ райкомăн тĕплĕн шухăшласа тунă план пур. Унта партиллĕ-политикăллă ыйтусем, кадрсене суйласа илес, йышăннă решенисене тĕрĕслес, актива вĕрентсе воспитани парас, пуçламăш парторганизацисене ертсе пырас ыйтусем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Пуçламăш парторганизацисене колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетессишĕн, партиллĕ-политикăллă ĕçе малалла лайăхлатассишĕн кĕрешмелли чи кирлĕ ыйтусене кăтартса пани пысăк вырăн йышăнать. Пуçламăш парторганизацин план çук пулсан, вăл «хăй юхăмĕпе» çеç ĕçлесе пырать пулсан, ăнсăртран сиксе тухнă ыйтусене çеç татса парса пырать пулсан, производствăри хăйĕн ертсе пыракан рольне çухатма пултарать.

Çавăнпа та ĕнтĕ КПСС райкомĕ пуçламăш парторганизацисене ĕçе план тăрăх йĕркелес тĕлĕшпе кирлĕ пулăшу пама тăрăшать. Эпир çак ыйтусене секретарьсен семинарĕсенче, райком бюровĕн ларăвĕсенче тăтăшах сӳтсе явма пуçларăмăр. Райком работникĕсем, чи малтанах инструкторсем, вырăнсенче пулса, секретарьсене ĕç планĕ тума пулăшаççĕ.

Кашни пуçламăш парторганизацин уйрăмлăхĕсене шута илсе, тунă план кăна лайăх пурнăçланма пултарать. Парторганизаци секретарĕ колхоз е предприяти умĕнче, пĕтĕм парторганизаци умĕнче мĕнле тĕп задачăсем тăнине лайăх пĕлме тивĕçлĕ.

Партиллĕ ĕçе план тăрăх мĕнле тĕрĕс йĕркелемелле?—тесе ыйтаççĕ час-часах хăшпĕр çамрăк кадрсем.

Пуçламăш парторганизаци умĕнче тăракан тĕп задачăсене КПСС Уставĕнче кăтартса панă.

Кашни руководителĕн план тунă чухне Устав хушнисене асра тытмалла тата вĕсемпе килĕштерсе малашнехи ĕçсене палăртмалла.

Партиллĕ ĕç—творчествăллă ĕç. Кунта формализм пулмалла мар. Пурнăç яланах çĕнĕ ыйтусем кăларса тăратать, çавна май парти организацийĕсен ĕçĕнче те çĕнĕ задачăсем тухса пыраççĕ. План тунă чухне çаксене пурне те шута илес пулать.

Практикăра çакăн пек те пулса тухать: пуçламăш парторганизаци секретарĕ, тĕп задачăсене пĕлсе тăрать пулин те, вĕсенчен тухса тăракан конкретлă мероприятисене палăртма пĕлмест. Кун пек чухне ăна райкомран вăхăтра пулăшу пани питех те вырăнлă пулать. Пĕр тĕслĕх илсе кăтартатăп. Пĕрлешсе пысăкланнă «Победа» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ П. Орлов юлташ план тунă чухне ĕçĕн çĕнĕ условийĕсене шута илмен. Пусă çаврăнăшĕ йĕркелес, çĕрĕç культурине ӳстерес тата ытти хăшпĕр ыйтусене пачах сиктерсе хăварнă. Çак çитменлĕхсене палăртса, КПСС райкомĕ парторганизаци секретарьне йăнăшсене тӳрлетме пулăшрĕ.

Предприятисенчи, колхозсенчи тата МТС-сенчи пуçламăш парторганизацисене администрацисен ĕçне тĕрĕслесе тăма право панă. Партиллĕ контроль ĕçри йăнăшсемпе çитменлĕхсене пĕтерме пулăшать, руководительсене государство заданийĕсене тултарса пыма вĕрентсе воспитани парать. Çавăнпа партиллĕ контроль правипе тăтăшах усă курмалла тата ку енĕпе уйрăм ыйтусене планра палăртса хумалла.

Халĕ пирĕн пуçламăш парторганизаци секретарĕсем контроль ыйтăвĕсемпе йышăннă решенисене епле пурнăçланине тĕрĕслессине малтанах палăртса хураççĕ. Çавна май парти пухăвĕсенче колхоз председателĕсен, бригадирсен тата ферма заведующийĕсен отчечĕсене час-часах итлесе сӳтсе яваççĕ.

Пуçламăш парторганизацисем хăйсен ĕç планне яланхи пекех пĕр уйăхлăха тăваççĕ. Унта партиллĕ тата политикăллă ĕçĕн тĕп ыйтăвĕсене палăртаççĕ, конкретлă срокĕсене тата палăртнă мероприятисене камсен пурнăçламаллине палăртаççĕ.

План тунă çĕре организацичи мĕнпур коммунистсем е унăн активлăрах пайĕ хутшăнсан аванрах пулать. Кун пек туни пурнăçри питех те кирлĕ мероприятисене палăртма май парать. Ку тĕлĕшпе пĕр тĕслĕх илсе кăтартма пулать. Ленин ячĕпе тăракан колхозра торф нумай, анчах унпа чылайччен усă курмасăр пурăннă. Иртнĕ çулта торфпа усă курасси çинчен парторганизаци пухăвĕнче сӳтсе явнă. Çавăн хыççăнах пуху йышăннă решение пурнăçлама тытăннă. Халĕ колхозра торфпа çĕре çемçетес ĕçре анлăн усă кураççĕ.

Парти пуçланă ĕçе вĕçне çитерме вĕрентет. Парти организацийĕн, пĕр-пĕр ĕçе тытăнсан, ăна вĕçне çитермесĕр пăрахмалла мар.

Иртнĕ çулхи январь уйăхĕнче Пренеш ял Советĕнчи «Большевик» колхозри пуçламăш парторганизаци ВЛКСМ пуçламăш организаци отчетне итлесе сӳтсе явнă. Коммунистсем комсомол организацийĕн ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене палăртнă, вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе паха сĕнӳсем панă. Тепĕр уйăхран парторганизаци çак ыйтăва каллех хускатнă. Çапла вара, ялти çамрăксене воспитани парасси чылай лайăхланнă.

Пуçламăш парторганизацисем юлашки вăхăтра план тăвассине тивĕçлипе хаклама тытăнчĕç. Тĕслĕхрен, «Комбинат» колхозри парторганизацие илер. Иртнĕ çул кунта бригадăсенче массăллă-политикăллă ĕç мĕнле пулса пыни, партире тăман актива воспитани парасси, коммунистсен марксистла-ленинла вĕренĕвĕ, ялти культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕ, агитколлектив ĕçĕ тата ыттисем çинчен те сӳтсе явнă. Çав ыйтусене пурне те парторганизаци хăйĕн планĕсене кĕртнĕ пулнă.

Хăйсен ĕçне планласа, пуçламăш парторганизацисем çĕнĕ ыйтусем лартма, коммунистсем паракан паха сĕнӳсене шута илме тăрăшаççĕ.

Пĕр уйăхлăха тунă плансемсĕр пуçне парти организацийĕсем тата тĕрлĕ кампанисем иртермелли тапхăр валли уйрăм мероприятисем палăртса хураççĕ. Çапла эпир çуракине хатĕрленсе иртернĕ, тырпул пухса кĕртнĕ, государствăна тырă панă тапхăрсенче ятарласа партиллĕ-политикăллă ĕç планĕсене тăватпăр.

Пирĕн районти парти конференцийĕн решенийĕсене пурнăçламалли план пур, çавăн пекех районти хуçалăхпа культура строительствин перспективлă планне те туса хунă. КПСС райкомĕн бюровĕпе райком пайĕсем çав мероприятисене мĕнле пурнăçланине тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Пĕтĕм районти парти организацийĕн кĕрешӳри пултарулăхне ӳстермелли условисенчен пĕри вăл—КПСС райкомĕ хăй ĕçне тĕрĕс планлани пулса тăрать. План тăвиччен эпир пуçламăш парторганизацисен ĕçĕсене тишкеретпĕр, вĕсем мĕн тума палăртса хунипе паллашатпăр, район хуçалăхĕн ĕçне тĕпчетпĕр. Коммунистсемпе партире тăман актив паракан критикăллă асăрхаттарусене уйрăмах шута илетпĕр. Çакăн хыççăн парти райкомĕн кашни пайĕ уйăхлăха план тăвать, унтан çав никĕс çинче райком планне тăватпăр. Çакна та палăртмалла: райком секретарĕсем тата хăйсем валли план тăваççĕ, çав план вĕсене хăйсен ĕçне конкретлăрах туса пыма май парать.

Райком планĕсенче партин шалти пурнăçĕпе идеологиллĕ ĕç ыйтăвĕсем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ Хуçалăх ĕçĕсене татса парас практика та улшăнчĕ. Эпир совет тата хуçалăх органĕсен ĕçĕсене хамăр татса памастпăр. Хамăр плансенче районти хуçалăх организацийĕсен руководителĕсен отчечĕсене итлеме палăртса хуратпăр Çуракине хатĕрленнĕ май, райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕ колхозсенче вăрлăх хатĕрлес ĕç мĕнле пынипе çителĕксĕр интересленнĕ. Райком бюровĕнче ялхуçалăх пайĕн заведующийĕн отчетне итлерĕмĕр Бюро хыççăн ялхуçалăх пайĕ хăйĕн ĕçне самаях улăштарчĕ. Агрономсем, юлса пыракан колхозсенче пулса, вĕсене вăрлăх хывма тата вăл вăрлăха акма юрăхлă тума пулăшрĕç.

Анчах партиллĕ ĕçе планлас енĕпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Эпир формализм элеменчĕсене тĕппипех пĕтереймен. Уйрăм пуçламăш парторганизаци секретарĕсем план тунă чухне коммунистсен сĕнĕвĕсене пур чухне те шута илмеççĕ-ха, палăртнă мероприятисене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешмеççĕ. Райком партиллĕ ĕçĕн опытне те çителĕксĕр пĕтĕçтерсе пырать.

Çак çитменлĕхсене пĕтерме эпир тивĕçлĕ мерăсем йышăнатпăр. Ĕçе тĕрĕс планлани райкомпа пуçламăш парторганизацисене массăсене политика енчен ертсе пырас ĕçĕн шайне тата çӳлерех хăпартма пулăшĕ, йышăннă решенисене пурнăçланине тĕрĕслессине лайăхлатма, хуçалăхпа культура строительствин задачисене ăнăçлă пурнăçа кĕртме май парĕ.

М. КУЗЬМИН,
КПСС Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ.

Ял культури ӳсет

Шăхасан районĕнчи «За коммунизм» колхоз çулленех пуянланса пырать. Артель уй-хирĕсенче вăйлă тырпул туса илеççĕ, фермăсенче выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ.

Иртнĕ çул ялта библиотека уçăлчĕ. Клуб пур. Кăçал районти сыхăну уйрăмĕн работникĕсем колхоза радио кĕртме пуçларĕç. Кĕске вăхăтрах 60 киле радио кĕртнĕ. Халĕ тата 100 киле радио кĕртме палăртнă.

Ялти çамрăксем ĕç хыççăн вăхăта культурăллă ирттереççĕ. Вĕсем кас-кас клуба пухăнаççĕ. Кунта вĕсем валли 14 экземпляр хаçат, 24 тĕрлĕ журнал пур. Радио кĕртнĕ хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем Мускавран тата Шупашкартан паракан передачăсене итлеççĕ.

В. НЕСТЕРОВ.

Лидия Тимашук почти

Чирлĕ çын патĕнче шурă халат тăхăннă çын тăрать. Вăл шприц илет-и, юн илсе тĕрĕслет-и, рецепт çырса парать-и,—вăл кирек мĕн тусан та, унăн ĕçне чирлĕ çын куçĕсем тимлĕн сăнаççĕ, ун çине пысăк шанăçпа пăхаççĕ.

Врач! Çак сăмахра этеме шанни, унăн пĕлĕвĕсемпе опытне ĕненни, çынсене юратни палăрса тăрать. Шурă халат вăл—врач тасалăхĕпе тӳрĕ кăмăллăхĕн тата пысăк гуманизмăн символĕ. Анчах врач чирлĕ çын шанса тăнине тӳрре кăлармасть пулсан, врачăн шурă халачĕпе витĕнсе преступлени тăвать пулсан, вăл, Тăван çĕршыва сутакан преступник пекех, çав тери киревсĕр ĕç тăвать.

Акă чирлĕ çын патĕнче шурă халат тăхăннă икĕ çын тĕл пулчĕç. Пĕри—ученăй, унăн ячĕ чапа тухнă, унăн ученăй степеньсем те пур, тепри (хĕрарăмĕ)—ученăй степеньсем çук, анчах вăл, врач пулса çирĕм çул ытларах ĕçлесе, пысăк опытпа пĕлӳ пухнă, вăл совет çыннисен сывлăхĕшĕн тата пурнăçĕшĕн пысăк ответлăх туйса тăрать. Вĕсен иккĕшĕн те пĕр пек анализсемех, чир паллисене вĕсем иккĕшĕ те пĕр пекех кураççĕ, анчах хĕрарăм-врач тепри, ученăй степеньсем илнĕ çын, тĕрĕс мар диагнозсем лартнине асăрхать. Диагноза тĕрĕс мар лартни—тĕрĕс мар сыватассине, çапла вара, чирлĕ çынна вĕлерессине пĕлтерет.

Мĕншĕн-ха вăл çавăн пек тăвать? Тен вăл медицина енĕпе йăнăшать? Анчах степеньсем илнĕ çыннăн пысăк пĕлӳсемпе опыт пур, вăл çавăн пек пысăк йăнăшах тума пултарайман пулĕччĕ. Çав вăхăтрах вăл ăна тӳрлетме хăтланнине йăлтах сире-сире пăрахать. Çапла вара, ку вăл йăнăш мар. Кам-ха вăл, санăн умăнти çын?

Çак ыйту çине ответлеме пĕр-ик сехет кăна кирлĕ мар, нумай вăхăт хушши тимлĕн шухăшлани, ĕçе лайăх пĕлни, хăвăн ĕçӳ тĕрĕссине пĕтĕмпех шанса тăни тата, пуринчен ытла, Тăван çĕршыв патриочĕ пулни кирлĕ. Вара пурне те ăнланса илме пулать. Çапла, çак хĕрарăм умĕнче тăшман пулнă, пĕччен те мар, Совет Союз тăшманĕсен ушкăнĕ, питех те тискер, чее, лайăх пытаннă тăшмансен ушкăнĕ пулнă.

Питех те йывăр кĕрешӳ пуçланнă. Степень илнĕ çынсем пысăк вырăнта ĕçлесе пурăннă, вĕсем хăйсем йĕри-тавра «хăйсен çыннисене» лартса тухнă. Анчах хĕрарăм Тăван çĕршыв тăшманĕсене хирĕç кĕрешнĕ пек, пурнăçне шеллемесĕр кĕрешнĕ. Тен, ăна çав кунсенче çунакан самолет курăннă, çав самолет çинче совет летчикĕ—хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлĕ ларса пынăн туйăннă пулĕ...

Нумаях та пулмасть эпир çав хĕрарăма пачах пĕлмен, халĕ вара Лидия Феодосьевна Тимашук врач ячĕ совет патриотизмĕн, сыхăлăхăн символĕ, пирĕн Тăван çĕршыв тăшманĕсене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр тата хăюллăн кĕрешнин символĕ пулса тăчĕ. Вăл Америкăна сутăннă сăтăрçăсене, шурă халатпа витĕнсе совет çыннисене вĕлерсе пурăннăскерсене, тупса палăртма пулăшрĕ.

Çынвĕлерен-врачсене тупса палăртма пулăшнăшăн Л. Ф. Тимашука пысăк награда—Ленин орденĕ пани çинчен калакан хыпар пирĕн пĕтĕм çĕршывĕпе саралчĕ. Лидия Феодосьевна миллионшар совет çыннисемшĕн çывăх та хаклă çын пулса тăчĕ. Славянскра пурăнакан ватă пенсионерка Л. Козачук хăйĕн çырăвне амăшĕ хĕрĕ патне янă çырури пек сăмахсемпе пуçлать: «Пирĕн Тăван çĕршывăн хаклă хĕрĕ! Эсир хăюллăх кăтартнăшăн тата Тăван çĕршыв умĕнче чыслă ĕç тунăшăн савăнатăп». Красногвардейскран Л. Филенкăпа Ф. Архипов çапла çыраççĕ: «Сирĕн портрета илме май пулнă пулсан, ăна пурте—ваттисем те, çамрăккисем те—рамка ăшне вырнаçтарса чи лайăх вырăна, кил-йыш альбомне хунă пулĕччĕç. Ку вăл эсир хăвăр халăхăн, Тăван çĕршывăн чăн-чăн хĕрĕ пулнине пĕлтерет».

Çак кунсенче Лидия Феодосьевна илекен çырусенче пуринче те ăна тăшмансене тăрă шыв çине кăларма пулăшнăшăн, хăйĕн халăхне хĕрӳллĕн юратнăшăн тав тăваççĕ. Л. Тихоновăпа Л. Галкина Тулăран çапла çыраççĕ: «Хăвăрăн хăюллă та патриотла ĕçпе эсир мир ĕçне сахал мар вăй хутăр... Халăх хисеплесе юратни сире яланах вăй парса тăтăр...». Сочири 10-мĕш шкулта вĕренекенсем хăйсен шухăш-кăмăлĕ çинчен сăвăпа çырса пĕлтереççĕ. Вĕсем Америкăна сутăннă ирсĕрсене çав тери тарăхса питлеççĕ.

Л. Ф. Тимашука награда парасси çинчен Указ пичетленсе тухнă хыççăн тепĕр куннех вăл телефон тăрăх хăй палламан сасса илтнĕ. Телефонпа ăна çапла каланă: «Пирĕн шурă халат тасалăхĕпе чысне сыхласа хăварнăшăн сире тав тăватпăр». Лидия Феодосьевна çак çыннăн ятне пĕлмест, анчах вăл кирек кам пулсан та, хăйсен халăхне парăннă тата уншăн тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен совет врачĕсен шухăш-кăмăлĕ çинчен каласа панă.

Çырусем нумай. Вĕсем Лидия Феодосьевна сĕтелĕ çинче купи-купипе выртаççĕ, хаçат редакцийĕсемпе парти организацийĕсене те çырусем нумай килеççĕ. Вĕсем Иркутскпа Ригăран, Ленинградпа Симферопольрен, Минскпа Клайпедăран килеççĕ, вĕсене Хĕвелтухăçĕнчи моряксем, Донбасри шахтерсем, пограничниксем, Украинăри колхозниксем, Читари агрономсем, Мускаври килхуçи хĕрарăмĕсем çыраççĕ.

Çак çырусенче пуринчен ытларах сыхăлăх çинчен каланă. Совет çынни кирек ăçта пулсассăн та, Америка империалисчĕсен каварне, вĕсем хăйсен агенчĕсене, шпионĕсене, диверсанчĕсене тата çынвĕлеренсене пирĕн çĕршыва яма хăтланнине асра тытма тивĕçлĕ. Сыхăлăхлă пулни, йăваш чунлă пулнине хирĕç тата çăвар карса ларнине хирĕç кĕрешни—хамăр Тăван çĕршыва тăшмансенчен хӳтĕленине, мире тата совет çыннисен телейлĕ пурнăçне хӳтĕленине пĕлтерет.

Л. Ф. Тимашукăн патриотла тĕслĕхĕ совет çыннисене хавхалантарать, сыхăлăхлă пулма тата кĕрешӳре хастарлă пулма вĕрентет.

Л. Ф. Тимашука награда илнĕ ятпа саламласа, совет воинĕсем çапла çыраççĕ: «Миллионшар пирĕн çынсем — тимлĕ, сисĕмлĕ, тӳрĕ кăмăллă çынсем—тăшмансем мĕн хăтланнине, вĕсем тем тĕрлĕ чее пытансан та, сыхă асăрхаса тăраççĕ. Сирĕн тĕслĕх вăл ирсĕрсен хавхалантаракансемпе руководителĕсене — çĕнĕ вăрçă чĕртесшĕн хыпăнакан Америкăпа Англи империалисчĕсене пырса çапни пулать. Лидия Феодосьевна, сирĕн тĕслĕх пĕтĕм совет халăхне, çав шутра пире, воинсене те, пирĕн Тăван çĕршыва тата пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ лагере тимлĕрех хӳтĕлеме хушать». Хусанта ĕçлекен работницăсем янă çырура çапла каланă: «Эсир, простой вырăс хĕрарăмĕ, акăлчансемпе американецсене тепĕр хут шухăша ятăр, вĕсен хăйсен шпионĕсен таса мар ĕçне тума пирĕн çĕршывра, коммунизм тăвакан тата мире хӳтĕлекен чаплă çынсем пурăнакан çĕршывра, никĕс шырамалла мар. Вĕсен çакна ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ: пирĕн çынсем сыхăлăхлă, акăлчансемпе американецсем пирĕн çĕршывăн вăй-хăватне хавшатма темĕн чухлĕ тăрăшсан та, вĕсене халĕ тытнă çынвĕлерекен тискерсен шăпиех пырса тивĕ».

Гидроэлектростанци строительствинчен М. Костко юлташ çапла çырать: «Эсир тăшмансене тăрă шыв çине кăларма Тăван çĕршыва пулăшни пире, коммунистсене, пĕтĕм совет халăхне çапла тума хушать: çăвар карса ларнине пĕтермелле, пирĕн пурнăçра пур çĕрте те сыхăлăха ӳстермелле».

Бийск хулинчи 2-мĕш номерлĕ çĕвĕ фабрикин коллективĕ янă çырура çапла каланă: «Эпир парти тата унăн çулпуçĕ Сталин юлташ тавра тачăрах пĕтĕçетпĕр, хамăрăн ĕçре сыхăлăхлăрах та тимлĕрех пулăпăр».

Америка агрессорĕсен пуçлăхĕсем Совет Союзĕн тата халăх демократи çĕршывĕсен территорийĕсем çинче ирсĕр, сăтăрла ĕçсем туса пынине пытарса тăма тахçанах пăрахнă ĕнтĕ.

Çынвĕлерен врачсене тăрă шыв çине кăларни совет çыннисене çапла асăрхаттарать: Америка захватчикĕсемпе вĕсен майлисем Совет Союзне тискер кайăксем пек кураймаççĕ. Сыхăлăхлă пулмалла, тата та сыхăлăхларах пулмалла!—çакă вăл пирĕн пурнăç законĕ пулмалла.

Пирĕн аслă Тăван çĕршывăн мĕнпур кĕтессисенчен Л. Ф. Тимашук патне килекен çырусем чаплă патриоткăна юратса хисепленине тата мухтанине кăна кăтартса памаççĕ. Çав çырусем çавăн пекех совет çыннисем Тăван çĕршыва тăшманла агентура каварĕнчен хӳтĕлеме хатĕр тăнине, сыхăлăхлă та тимлĕ пулнине, советлă Тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем пулнине кăтартса параççĕ.

Ольга ЧЕЧЕТКИНА.

(«Правда» хаçатран).

И. В. Сталин юлташăн „ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем“ ятлă ĕçĕ тăрăх пулнă наукăллă сесси

БАКУ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Азербайджан университетĕнче Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ тата партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем тăрăх пулнă наукăллă сесси вĕçленнĕ.

Пĕрлехи ларура «И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ ĕçĕ» çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем çинчен тата Сталин юлташ съездăн юлашки ларăвĕнче каланă сăмах çинчен докладсем итленĕ.

Сессире «Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенчен Азербайджан геологĕсем умне тухса тăнă задачăсем çинчен», «Партин XIX-мĕш съезчĕ тата Азербайджан биологĕсем умĕнче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе тăракан задачăсем» çинчен докладсем пулнă.

Районта тухакан çĕнĕ хаçат

ГУРЬЕВ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). КПСС Новобогатински райкомĕпе ĕçсыннисен депутачĕсен район Совечĕн казах чĕлхипе «Малшилар уни» («Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен сасси») ятлă хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухнă.

Халĕ Гурьев облаçĕнчи пур районсенче те хаçатсем тухаççĕ.

Ишлей районĕнче кино кăтартас ĕç япăх пырать

Партипе правительство куллен тăрăшнипе халăха кино кăтартас ĕçе пĕрмай лайăхлатса пыма пур условисене те туса панă. Анчах та КПСС Ишлей райкомĕпе райсовет исполкомĕ çав майсемпе усă курмаççĕ. Районта кино кăтартас ĕçе япăхтарнă. Кино кăтартса укçа пухмалли плана район çултан-çул тултарса пыраймасть. Сăмахран, 1952 çулти плана киносеанссем тăрăх 70 процент, куракансем тăрăх 48 процент, кино курнăшăн укçа пухмалли плана вара 38 процент кăна тултарнă. 1953 çулти январь уйăхĕнчи плана та тултарман. 1952 çулта, нимле чăрмавсем пулман пулин те, планпа пăхнинчен 497 киносеанс кăтартман.

Ишлей районĕнче кино кăтартас ĕç япăх пыни ялти клубсемпе çаплах вырăнсăр усă курнинчен, час-часах вĕсене кино ирттерме хатĕрлесе çитерменнинчен чылай килет. Сăмахран, «Большевик» колхозри, Ленин ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан колхозсенчи клубсенче çуллахи вăхăтра чăх-чĕп усраççĕ, хĕллехи кунсенче вара çав клубсенчен склад туса хураççĕ. Мишерти, Салапайкассинчи, Ишекри тата ытти хăшпĕр клубсене, вутă çук пирки, хутса ăшăтмаççĕ. Районти культура çуртĕнче те сивĕ. Паллах, ăшăтман клубсене кино курма никамăн та çӳрес килмест.

Условисем çук пиркиех Ишлей районĕнчи нумай ялсенче кино кăтартас ĕçе пачах йĕркелемен, çакна пула колхозниксемпе колхозницăсем кино курмасăр пурăнаççĕ. Район центрĕнче тата хăшпĕр ялсенче «Клятва», Мичурин», «Незабываемый 1919» кинокартинăсене кăтартнă, анчах çак чаплă фильмсене курма, клубсенче сивĕ пирки, çынсем питĕ сахал пухăннă.

Кинопередвижкăсене йĕркеллĕ ĕçлеттерме тăрăшмаççĕ. Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕпе Ишлей районĕнчи кинофикаци пайĕ çав ыйту çине ответсăр пăхаççĕ. Районта 9 кинопередвижка пур, анчах та вĕсенчен çурри ытла юрăхсăр.

Кино кăтартасси кунта маршрутсăр, хăйне тĕллĕн пулса пырать. Киномеханиксем хăш яла каяс теççĕ, çавăнта каяççĕ. Инçетри ялсенче пулма тăрăшмаççĕ. Кинопередвижка çĕмĕрĕлсен вара, кино кăтартасси пачах сӳнсе ларать. Çакна никам та тĕрĕслемест, унпа никам та интересленмест. Сăмахран, Васликасси, Мăнал, Мишер, Кăшавăш ял Совечĕсенче ĕçлекен кинопередвижка (механикĕ Осипов юлташ) 1952 çулти декабрĕн 15-мĕшĕнчен вара ĕçсĕр ларать. Районти кинофикаци пайĕн начальникĕ Изванов юлташ çакăн çинчен нимĕн те шухăшламасть, кинопередвижкăна ĕçе ярас пирки мерăсем йышăнмасть.

Райсовет исполкомĕпе унăн кинофикаци пайĕ кинопередвижкăсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарма транспорт памаççĕ. Сăмахран, декабрьпе январь уйăхĕсенче транспорт çук пирки кинопередвижкăсене Калинин ячĕпе тăракан колхозра 4 кун, Андреев ячĕпе тăракан колхозра 3 кун, «Герой» колхозра 5 кун, «За коммунизм» колхозра 6 кун тытса тăнă.

Вĕренекен ачасене кино сахал кăтартаççĕ. 1952 çулта ачасене 94 кинокартина çеç кăтартнă. Çичĕ çул вĕренмелли шкулсене ача-пăча картинисене сайра хутра кăна илсе пыраççĕ, çавăн пирки ачасем киносене çĕрле çӳреççĕ. Тăрăнти çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекен Г. Антипов районти «Колхозник хаçачĕ» хаçатра: «Эпир ĕнтĕ тăватă уйăх хушши нимле кинокартина та курман»,—тесе çырать.

Ĕçсыннисене кино кăтартасси çинчен вăхăтра пĕлтермеççĕ. Пĕлтерӳсене япăх, илемсĕр, картинăсен ятне каламасăр çыраççĕ.

Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ пысăк идейăллă, документлă, наукăллă кинофильмсене пропагандăлас тĕлĕшне сахал ĕçлеççĕ, кинофильмсем çинчен лекцисемпе докладсем, кино куракансен конференцийĕсене ирттермеççĕ.

Киноработниксене хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Киномеханиксемпе мотористсен ĕçĕсемпе, кинофикаци пайĕн начальникĕсĕр пуçне, никам та интересленмест. Парти райкомĕпе райисполкомăн ответлă работникĕсем киноработниксемпе тĕл пулса калаçмаççĕ, вĕсен пĕлӳлĕхне ӳстерессишĕн, йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн тăрăшмаççĕ. Çавăн пирки 1951 çултанпа кинофикаци пайĕн начальникĕ виçĕ хутчен, 1952 çулта тăватă киномеханик, пилĕк моторист улшăннă.

Киноработниксем хушшинче дисциплина япăх. Картинăсене кăтартнă чухне час-часах мотор чарăнса ларать, пленкăсем таталаççĕ. Дисциплина çук пирки, киноработниксем хушшинче киревсĕр ĕçсем те пулса иртеççĕ. 1952 çулти декабрь уйăхĕнче Ишекри вăтам шкулта вĕренекен ачасене Семенов киномеханик кино кăтартмалла пулнă. Вăл, ачасене улталаса, укçа пухнă та укçине ĕçсе янă, кино кăтартмасăрах ялтан тухса кайнă.

Ишлей районĕнче халăха кино кăтартас ĕçе лайăхлатмалла, киноработниксен политикăллă пĕлӳлĕхĕпе дисциплинине ӳстермелле, вĕсене çирĕп маршрутсем туса памалла, кашни колхозрах, кашни ялтах уйăхне 3—4 хут кино кăтартмалла.

Я. ЛАРЬКОВ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Советски районĕнчи Шверник ячĕпе тăракан колхозри çитменлĕхсем çинчен çырнă «Кая юлнă çĕрте» ятлă заметкăна ĕçсынни депутачĕсен Советски район Совет исполкомĕн ялхуçалăх пайне, заметкăра каланисене тĕрĕслеме тата çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Ялхуçалăх пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, пĕтĕмĕшпе илсен, заметкăра çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса панă. Колхоз председательне çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтермелле тата хĕллехи агротехника ĕçĕсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле тума хушнă.

Заметкăра 7 гектар çинчи çĕрулми юр айне юлни çинчен çырнăччĕ. Ялхуçалăх пайĕ çак факта колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе явни, çĕрулми шăнтса ярса айăпа кĕнисене ответ тыттарни çинчен пĕлтерчĕ.

* * *

1952 çулхи декабрь уйăхĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Октябрьски районĕнчи Хуракасси вăтам шкулĕнчи çитменлĕхсем çинчен çыру килнĕччĕ. Çак çырусенче шкул директорĕн С. К. Генинăн çитменлĕхĕсене кăтартса панăччĕ.

Чăваш АССР Çутĕç министерстви çырура асăннисене вырăна кайса тĕрĕслени çинчен пĕлтерчĕ. Министерство пĕлтернĕ тăрăх, С. К. Генин çинчен тĕрĕс çырнă. Ăна директор ĕçĕнчен хăтарнă.

Редакцие килнĕ çыру

Канашри автовокзалта йĕркелĕх çук

Канашри автовокзалăн сивĕ пӳлĕмĕнче халăх туп-тулли. Хăшĕсем вăрăм сухаллă тăлăп тăхăннă, теприсем пальто вĕççĕн пӳлĕм тăрăх калле-малле уткаласа çӳреççĕ.

Пӳлĕмре Совет Çарĕнчен отпуска таврăнакан салтаксемпе офицерсем пур. Хăшпĕрин Çĕрпӳпе Шупашкар еннелле, теприсен—Елчĕкпе Патăръел еннелле каймалла.

— Кая юлас мар тесе, ултă сехет çурăрах кунта килтĕм, билет илтĕм,—тет пĕр çамрăк офицер.— Расписани тăрăх Патăръел еннелле Канашран автобус Мускав вăхăчĕпе çичĕ сехетре тухса каймалла. Эпир акă сехет çурă кĕтетпĕр, çичĕ сехет кăна мар, сакăр сехет çывхарать, çапах автобус килни курăнмасть-ха. Аттепе-анне те кĕтсе ывăнчĕç пуль ĕнтĕ...

Автовокзала çынсем пухăннăçемĕн пухăнаççĕ.

— Ман Шупашкара каймалла, кая юлмарăм-и? — касса умне пырса тăчĕ командировкăран таврăнакан çын.

— Машина килмен-ха. Билет илме пултаратăр,—типпĕн çеç ответлерĕ ăна пĕчĕк кантăк витĕр З. Муханова кассир.

Çынсем пурте билет илсе пĕтернĕ ĕнтĕ. Канашри автовокзалтан каякан автобуссем Шупашкар еннелле те, çавăн пекех Патăръел еннелле те мăшăрлă числасенче Мускав вăхăчĕпе ирхине çичĕ сехетре тухса каймалла. Сакăр сехет иртрĕ, автовокзал умĕнче пĕр автобус та курăнмасть-ха. Çакна пула пассажирсем пăшăрханма тытăнчĕç, кассирăн пĕчĕк кантăкне пырса шаккаççĕ.

— Кĕтсе ывăнтăмăр. Шăннипе алăсем пăр пекех хытса ларчĕç ĕнтĕ. Машинăсем хăçан пулаççĕ сирĕн?—ыйтаççĕ вĕсем.

— Машинăсем заправкăра, халĕ кăна ыйтса пĕлтĕм,—кашни хутрах пĕр пек ответлет кассир.

Пассажирсем кĕтеççĕ. Акă Н. Порфирьев шофер автобуса автовокзал умне илсе пырса тăратрĕ.

— Камăн Шупашкара каймалла? Ларăр хăвăртрах! — алăка уçса кăшкăрчĕ пĕр хĕрарăм.

Автовокзал таврашĕнче уткаласа çӳрекенсем чупкалама тапратрĕç. Тепĕр виçĕ минутран автобус кăвак тĕтĕм кăларса Шупашкар еннелле вĕçтерчĕ.

— Автобус кайрĕ-и?!. Апла пирĕн билет ахалех пĕтрĕ,—тăрса юлчĕç буфета ăшăнма кĕнĕ пассажирсем. Вĕсем аптранипе кассирпа калаçма пуçларĕç.

— Машина кайнă. Айăпăр хăвăрта,—пĕр сăмахпа татса каларĕ кассир.

Çакăн пек ĕçлеççĕ Канашри автотранспорт кантурĕнче. Автобуссем кунтан вăхăтра тухса каймаççĕ. Автотранспорт кантурĕн начальникĕ З. Гадилов юлташ ĕçе тĕрĕс йĕркелес тесе нимĕнле мерăсем те йышăнмасть.

Канашри автовокзала иртнĕ çулла лартрĕç. Анчах кунта пассажирсене тивĕçлипе кĕтсе илсе ăсатас енĕпе нимĕн те тумаççĕ. Автовокзалта сивĕ, пассажирсене ларма вырăн сахал. Вулама хаçат-журналсем çук. Буфет уçман.

Хăçан йĕрке пулĕ-ши Канашри автовокзалта?

А. АНДРЕЕВ,
С. АСЛАН,
И. КУЗЬМИН.

Критикăпа библиографи

Миршĕн кĕрешме пулăшакан кĕнеке

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта палăрнă чăваш писателĕсем хушшинче Владимир Садай паллă вырăн йышăнса тăрать—вăл пысăк формăллă произведени çырас тĕлĕшпе пикенсе ĕçлет. Нумай пулмасть, Чăвашгосиздат унăн пирвайхи романне*) пичетлесе кăларчĕ.

Владимир Садай çамрăклах вăрçа кайнă, летчиксемпе пĕрле пурăннă, пĕрле тăшмана хирĕç кĕрешнĕ. «Летчиксем» романра вăл хăйĕн фронтри юлташĕсем — летчиксемпе штурмансем, механиксемпе радистсем, шоферсемпе техниксем, офицерсемпе салтаксем çинчен çырать. Произведенири тĕп геройсенчен пĕри—Валентин Александров, тин çеç летчиксен шкулĕнчен вĕренсе тухнă лейтенант. «Çил пек малалла ыткăнакан поезд» ăна фронта илсе каять. Валентин хăй ача чухнехине аса илет. Çак ачаш тапхăр çинчен автор ăшă сăмахсемпе çырать. Малалла вăл Валентин Александровăн килте шăллĕсемпе йăмăкĕ, «чирлĕрех те ыра амăшĕ» юлнине пĕлтерет. «Хăйне яланах лăпкă тытма тăрăшакан ашшĕ» фронтра, Сталинград çывăхĕнче тăшманпа çапăçать. Романăн малалли сыпăкĕсенче Валентин та сывлăшра тăшманпа çапăçма тытăннине кăтартнă.

«Летчиксем» романăн тĕп шухăшне—идейине автор вокзалри пĕчĕк сценăра уçса парать. «Валентин çумĕнче ларакан пĕр салтак чĕлĕм чĕртсе пама ыйтрĕ:

— Ăçта, фронталла каятпăр-и?

— Çавăнталла шăватпăр, пичче,—терĕ Валентин. Салтак Валентин çумнерех куçса ларчĕ те, темле вăрттăн япала çинчен ыйтнă пек, шăппăн:

— Мĕнле шутлатăр эсир, час çĕнтерейĕпĕр-и нимĕçе?—тесе ыйтрĕ.

— Вăраха ямастпăр!—терĕ ăна хирĕç Валентин. Ответ ытла та кĕске тухрĕ. Салтак уншăн кӳренмерĕ-ши тесе, Валентин ун çине пăхса илчĕ. Анчах лешĕ ним те чĕнмерĕ. Пăртак шухăша кайса ларнă хыççăн, вăл чĕлĕмне кăларчĕ те, тем аса илнĕ пек пулса, лăпкăн калаçма пуçларĕ:

— Эсир тем ан шухăшлăр, эпĕ иккĕленместĕп ун пирки,— терĕ вăл.—Ĕмĕрне тăшман айне пулса асап курман — çĕнтеретпĕрех. Пĕтĕм Рассей çĕкленчĕ вĕт... Тата пирĕн Сталин пур, Сталин!».

Çак шухăш—пĕтĕм совет халăхĕн шухăшĕ. Кăна автор романăн малалли сыпăкĕсенче—геройсен ĕçĕпе кĕрешĕвĕсенче ĕненмелле сăнласа кăтартать. Кунта автор пултарулăхĕ уйрăмах фронтовиксене сăнласа панă чухне кашни çын уйрăмлăхне, характерне, вĕсен ĕçĕнчи, чĕлхинчи уйрăмлăха сăнаса çырма пĕлнинче курăнать. Акă пирĕн куç умне чĕрĕ çын пек Валентин Александров тухса тăрать.

Вăл лăпкă характерлă, тӳрĕ кăмăллă, вăтанчăк сăн-питлĕ, ĕçе кирек хăçан та тĕплĕн шухăшласа тума юратакан çамрăк çын. Унăн юлташĕ Андрей Барабошкин вара йăлтах урăхла—вăл часах вĕриленсе кайма пултаракан, кирек мĕнле ĕçе те васкаса тума юратакан чăрсăр хитре каччă. Вăрçăччĕнхи мирлĕ вăхăтра вĕсем иккĕшĕ те хĕрупрассен чунĕсене «çунтаракан» йĕкĕтсем пулнă. Ахаль мар Валентин тăтăшах хулана юлнă Соня ятлă хĕре асăнать. Барабошкинăн та тылри хулана савнийĕ тăрса юлнă-мĕн.

Фронтра çак икĕ тус истребительсен полкĕнче çапăçура пулнă чăн-чăн летчиксене тĕл пулаççĕ. Автор вулакансене çĕнĕ геройсемпе паллаштарать. Кунта Владимир Садай геройсен характерĕсене кăтартнă чухне çĕнĕ меслетсемпе, çĕнĕ тĕслĕхсемпе усă курма пĕлни, шаблонла эпитетсен тыткăнĕнче тапăртатса тăманни килĕшет.

Тĕслĕхшĕн çакна кăтартса хăварăпăр. Александровпа Барабошкин Патрикеево çывăхĕнчи аэродрома çитсен, штабри дежурнăй офицерпа паллашаççĕ. Вăл Леонид Саксонов. Çак «ялан кулса тăракан пысăк кăвак куçлă» çын сăнарне автор пĕр пĕчĕк эпизодрах уççăн палăртать. «Халĕ ĕнтĕ эсир килте, ниçта васкамалли те çук» тесе, вăл Александровпа Барабошкина столовăя кайса апатланма, унтан кăштах канса илме сĕнет. Калама çук ырă кăмăллă çын вăл Саксонов. Малалли страницăсенче автор Саксонова сывлăшри çапăçура кăтартать: тăшман тапăннă юлташне çăлассишĕн вăл хăйĕн пурнăçне хĕрхенмесĕр çапăçать, çĕнтерет, юлташне те вилĕмрен хăтарать. Саксонов романри тĕп герой мар, апла пулин те вăл вулакан асĕнче юлать. Ку Владимир Садай произведенире асăннă кашни геройăн характерлă енĕсене кăтартма пĕлнинчен килет.

Владимир Садай пултарулăхне тата тепĕр тĕслĕх те аван кăтартать. Автор çапла çырать: «Гаврилов аэродромран тĕттĕм пулсан тин таврăнчĕ. Тем тĕрлĕ ывăнса çитнĕскер, вăл регланĕпе аттисене хывмасăрах кровачĕ çине таянчĕ те, чылайччен пĕр хускалмасăр, тарăн шухăша кайса выртрĕ.

Куç умне юлашки вĕçевре хăйĕн ведомăйĕ пулнă Петров тухса тăчĕ. Пур япала çине те тĕлĕнсе, ачалла тĕпчесе пăхакан тарăн куçсем... Çирĕпленсе çитмен, черченкĕрех те янравлă сасă... Ку сасă халĕ те Гаврилов хăлхинчех тăрать-ха. «Сывă пул, командир! Таран тăватăп»,

Гаврилов сăнарне автор пысăк сисĕмлĕхпе çырнă, унăн вăрçăччĕнхи пурнăçĕ те, фронтри хĕрӳ кунĕсем те, тăшман тылне юлнă арăмĕ çухални те—пурте вулакана хумхантаракан страницăсем пулса тăраççĕ. Çамрăк истребительсене тăшмана хирĕç пĕлсе çапăçма вĕрентнĕ чух Гаврилов кашни летчик çине хăйĕн тăванĕ çине пăхнă пек пăхать, вăл Александровпа Барабошкина та сывлăшри çапăçусен паттăрĕ пулма вĕрентет. Гаврилов, Саксонов, Александров, Самарин, Барабошкин летчиксем Сталинград çинче вĕçекен тăшмансене ашкăнма памаççĕ, ăçта курнă—унта пере-пере антараççĕ, е сывлăшрах вут тивертсе çунтараççĕ. Юнлă çапăçу тăкаксăр пулмасть. Пĕррехинче сывлăшри çапăçуран Саксонов таврăнмасть, тепринче Барабошкин пуçне хурать, Самарин йывăр аманать...

Роман фронтри трагедилле сценăсене тепĕр хут куç умне кăларса тăратать. Акă, Самарин летчика госпитальте операци тăваççĕ. Унăн пичĕ çине кислород маски хунă, сăнĕ курăнмасть. Операци вăхăтĕнче çамрăк летчик вилсе каять. Унтан кислород маскине илеççĕ те—операци тăвакан врач хăйĕн ывăлне палласа илет.

Çакнашкал сценăсем кĕнекере чылай, анчах «Летчиксем» роман—пессимистла произведени мар, вулакансене вăрçă хăрушлăхĕпе хăратакан кĕнеке те мар. «Летчиксем» романăн кашни страници Совет Союзĕнчи халăхсен пĕрлĕхне, паттăрлăхне, никам çĕнтерейми хăватлăхне кăтартать, ăна вулакан малтанхи страницăран пуçласа вĕçне çитиччен туять, паттăр летчиксем тăшмана çĕнтересех пынине курать. «Летчиксем»—миршĕн кĕрешме пулăшакан кĕнеке.

Владимир Садайăн литература ĕçĕнчи ăсталăхне палăртнă май эпир сюжет тата чĕлхе тĕлĕшĕнчен тухса тăракан ыйтусем çинче чарăнса тăрасшăн.

«Летчиксем» романа темиçе тĕрлĕ сюжетпа çырнă. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем пулаççĕ.

Валентин вагонра Самарин врача тĕл пулать; врач—Соня ашшĕ, Соня Валентинăн савнă хĕрĕ; фронта çитсен Валентин Соня пиччĕшĕпе—Самарин летчикпа пĕр полка лекет, кайран, тылри хулара, Соньăна тĕл пулать. Çакăнпа романăн пĕрремĕш кĕнеки пĕтет.

Çакнашкал сюжетлă йĕр автора Самаринсен çемйине кăтартма кирлĕ пулнă, кунта вулаканшăн ĕненмелле марри те çук пек туйăнать. Апла пулин те, фронтри Александров икĕ Самаринпа та тĕл пулни—автор кăштах ытлашши «тăварланине» пĕлтерет. Тăварлă яшка сĕтеклĕ, теççĕ тĕ, анчах вăл çиекенсен кăмăлне кайсах пĕтмест. Çавăнпа та эпир Владимир Садая малашне сюжетлă йĕр шыранă чухне текех «ытлашши тăварлама» кирлĕ маррине астутарса хăварасшăн.

Тепĕр çитменлĕх вăл—сюжетри йĕрсем пĕри те романри тĕп герой Александров характерне анлăрах уçса пама пулăшмаççĕ. Романăн иккĕмĕш кĕнекинче Валентин Александров малалла ӳссе, çитĕнсе пынине сюжетри йĕрсенчен тухса тăракан конфликтсенче курас килет. Владимир Садай—пултаруллă çамрăк писатель, çавăнпа та вăл, кунта кăтартнă çитменлĕхсене текех тумĕ, тесе калас килет.

Сюжет ыйтăвĕпе пĕрлех сăнарсен типлăхĕ тухса тăрать. Романри геройсем, пурте тенĕ пекех, ĕненмелле, пурнăçра курнă çынсем евĕрлех туйăнаççĕ. Пуринчен ытла автор пултарулăхĕ Самарин, Сапунова, Гаврилов, Александров сăнарĕсенче курăнать. Кусем пурте харпăр хăй сăн-сăпатлă типсем. Романра тата Нина Павловна Сапунова упăшки—Сергей пур. Фронтри таса кăмăллă та вĕри чĕреллĕ паттăрсем хушшинче Сергей та кайра тăман, çапăçура вăл та юн тăкнă. Анчах аманса госпитале лексен, вăл арăмне тĕл пулать те ăна кӳрентерекен хыпар пĕлтерет: эпĕ текех санăн упăшку мар, запасной полкра чухне пĕр фельдшерицăпа паллашрăм, унтан авлантăм, тет.

Вулакан Сергей юри калать пулĕ, суранлăскер, текех Нина Павловнăпа пĕр тан пулаймасран шикленсе калать, тесе шутлать. Çук иккен, юри мар—Сергей чăнах та Нина Павловнăна пăрахса тепре авланнă.

Çакăн пек киревсĕр хăтланакана литературăра типласа кăтартмалла-и? Кăтартмалла! Владимир Садай пурнăçри çитменлĕхсемпе кăлтăксене пытарса тăмасть, вĕсем çинчен вăл уççăнах калать. Ку тĕрĕс, пурнăçра таса кăмăллă çынсем хушшинче çăмăлттайсем е киревсĕр ĕç тăвакансем те пур. Çавăнпа вĕсен сăнарĕсене литературăра та кăтартмалла, воспитани парас ĕçре йăлари çитменлĕхсене пытарса тăмалла мар.

Çапах та, Сергей сăнарĕ романра шупкарах курăнать. Автор ăна пĕр енчен кăна кăтартать.

Сергей сăнарĕ пулса çитнĕ-и?

Пирĕн шутпа, автор Сергей сăнарне типласа кăтартас задачăран пачах пăрăнса кайнă. Сергее суранланнă хыççăн иккĕмĕш арăмĕ йышăннă пулсан, вара вăл Нина Павловнăна хăй кӳрентерни çинчен асăнмастчĕ-ши-мĕн? «Мана чăлах-уксах упăшка кирлĕ мар», тесе çыракан пуш чĕреллĕ хĕрарăм вырăнĕнче тӳрĕ кăмăллă çын пулнă пулсан, вăл Сергей суранланни çинчен пĕлнĕ-пĕлмен ун патне пынă пулсан, вара Сергейшĕн телейлĕ пурнăç пуçланса каятчĕ-ши-мĕн? Автор Сергей йăнăшне, унăн сăнарне тĕрĕс уçса парайман.

«Летчиксем» роман çăмăл вуланать, унăн чĕлхинче паха тĕслĕхсем, асра юлмалли эпитетсем нумай. Автор сăмаха хаклама пĕлет, унăн хăвачĕшĕн, витĕмлĕхĕшĕн тăрăшать. Çапах та, вырăнĕ-вырăнĕпе йывăр танлаштарусем, трафаретлă предложенисем, е вырнаçусăр сăмахсем тĕл пулкалаççĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, «Летчиксем» роман—паха произведени.

А. ТАЛВИР.

---

*) Владимир Садай — «Летчиксем». Роман. 192 стр. Чăвашгосиздат, 1952 çул.

СОВЕТ ҪАРӖ 35 ҪУЛ ТУЛТАРНИНЕ КИТАЙРА УЯВЛАНИ

ПЕКИН, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Дайреньрен ҫапла пӗлтерет:

Китай Халӑх Республикин Центральнӑй Халӑх Правительствин делегацийӗ, государство администраци совечӗн премьерӗ тата Китай Халӑх Республикин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Чжоу Энь-лай ертсе пынипе, Порт-Артурта пулса, февралӗн 22-мӗшӗнче Совет Ҫарӗ 35 ҫул тултарнӑ ятпа пулнӑ митинга хутшӑннӑ.

Митингра правительствӑн вырӑнти органӗсен, ирӗклӗхшӗн кӗрешекен халӑх ҫарӗн, демократиллӗ партисен тата халӑх организацийӗсен представителӗсем, ҫавӑн пекех тата Совет Союзӗн гарнизонӗнчи ҫар представителӗсем пулнӑ. Митингра премьер Чжоу Энь-лай тата ССР Союзӗн Китай Халӑх Республикинчи посолӗ А. С. Панюшкин сӑмах тухса каланӑ.

Китай Халӑх Республикин Центральнӑй Халӑх Правительстви хушнипе премьер Чжоу Энь-лай Совет Союзӗн Порт-Артур гарнизонӗнчи ҫарӗсен командующине ялав тата офицерсемпе салтаксене Китайпа Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх ячӗпе медальсем панӑ. Медальсем ҫине Мао Цзэ-дун «Совет Союзӗпе Китайӑн аслӑ халӑхӗсем тата Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйӗсем чӗререн пӗр шухӑшлӑ пулни Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче тата пӗтӗм тӗнчере мирӗн шанчӑклӑ тӗрекӗ пулса тӑрать» тесе ҫырнӑ.

Митинг хыҫҫӑн премьер Чжоу Энь-лай Совет Ҫарӗн офицерӗсемпе представителӗсен ячӗпе йышӑну тунӑ.

ООН Генеральнӑй Ассамблейин ҫиччӗмӗш сессийӗ ҫӗнӗрен ӗҫе тытӑннӑ

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 24-мӗшӗ (ТАСС). Паян кӑнтӑрла Нью-Йоркра ООН Генеральнӑй Ассамблейин ҫиччӗмӗш сессийӗн иккӗмӗш пайӗ пуҫланнӑ.

Вунӑ минута яхӑн пынӑ ларура Генеральнӑй Ассамблея председателӗ Пирсон сӑмах тухса каланӑ. Вӑл США президенчӗ Эйзенхауэр Генеральнӑй Ассамблейӑна янӑ саламлӑ послание вуласа панӑ тата сессин иккӗмӗш пайӗн ӗҫ планӗсем ҫинчен кӗскен каласа панӑ.

Пирсон Политикӑллӑ комитет февралӗн 25-мӗшӗнче ӗҫе тытӑнасси ҫинчен пӗлтернӗ. Унта Корея ҫинчен тӑракан ыйтӑва сӳтсе явма пуҫлаҫҫӗ.

РУМЫНИПЕ БОЛГАРИ ХУШШИНЧЕ ТАВАР ҪАВРӐНӐШӖ ҪИНЧЕН ТУНӐ КИЛӖШӲ

БУХАРЕСТ, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Румыни телеграф агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, февралӗн 21-мӗшӗнче Бухарестра Румыни Халӑх Республикипе Болгари Халӑх Республики хушшинче 1953 ҫулти тавар ҫаврӑнӑшӗ тата тӳлевсем ҫинчен килӗшӳ туса алӑ пуснӑ.

Калаҫусем туслӑ тата пӗр-пӗрне ӑнланнипе иртнӗ.

Килӗшӳ ҫине Румыни Халӑх Республики енчен тулашри суту-илӳ министрӗ А. Бырлэдяну, Болгари Халӑх Республики енчен — тулашри суту-илӳ министрӗ М. Юдугов алӑ пуснӑ.

Шыв тулнипе сиен курнӑ Англи халӑхне Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисем пулӑшни

ЛОНДОН, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Февраль уйӑхӗнче Англире шыв вӑйлӑ тулнипе 3.000 ҫын ытла ҫухалнӑ тата 50.000 ҫынна яхӑн кил-ҫуртсӑр тӑрса юлнӑ.

Ҫакна май ССР Союзӗн посолӗ А. А. Громыко Англин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствинче пулнӑ, Англи халӑхне килсе тухнӑ инкек пирки пӑшӑрханни ҫинчен пӗлтернӗ.

Шыв тулнипе сиен курнисене пулӑшма Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисем 90.000 кӗренке стерлинг укҫа ярса панӑ. Пулӑшу фончӗ ВЦСПС-ран 50.000 кӗренке стерлинг, Центросоюзран—20.000 кӗренке стерлинг, Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Ҫурӑйӑх Обществисен Исполкомӗнчен—12.000 кӗренке стерлинг тата фашизма хирӗҫ кӗрешекен совет хӗрарӑмӗсен Комитетӗнчен—8.000 кӗренке стерлинг укҫа илнӗ.

Хаҫатсем нумайӑшӗ Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисен пулӑшӑвӗ ҫинчен пӗлтернине малтанхи страницӑсенче пичетлесе кӑларнӑ. «Таймс» хаҫат ҫак ыйту пирки ятарласа статья ҫырнӑ.

ЛОНДОН, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Англипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх обществин председателӗ Г. Плэттс-Миллс ВЦСПС-а, Центросоюза, Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Ҫурӑйӑх обществисене, фашизма хирӗҫ кӗрешекен совет хӗрарӑмӗсен комитетне телеграмма янӑ. Телеграммӑра вӑл Англире шыв тулнипе сиен курнисене пулӑшнӑшӑн тав туса каланӑ. «Эсир нумаях пулмасть Англипе шыв тулнипе сиен курнисене пысӑк пулӑшу пани вӑл Англипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑха тӗреклетес ӗҫре пысӑк парне пулса тӑрать, вӑл Эсир пур ҫынсене те, вӗсем наципе политикӑллӑ шухӑшсем тӗлӗшӗнчен мӗнле ҫынсем пулнине пӑхмасӑр, чӗререн этемле хӗрхенни ҫинчен калать», тенӗ телеграммӑра.

Лондон мэрӗ лорд Руперт де ля Бере Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисем патне янӑ ҫырура Хӗвелтухӑҫпа Кӑнтӑр-Хӗвелтухӑҫ Британири нумаях пулмасть пулса иртнӗ тӑвӑлпа шыв тулнинчен сиен курнӑ халӑха чӗререн хисепленӗшӗн Совет Союзӗнчи организацисене тав туни ҫинчен каланӑ. «Ҫак пулӑшӑва хутшӑннӑ ҫынсене пурне те ырӑ кӑмӑлпа панӑ сирӗн пулӑшупа усӑ куракан ҫынсем чӗререн вӗсене тав туни ҫинчен каласа пӗлтерӗр» тенӗ телеграммӑра.

ЛОНДОН, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Премьер-министр Черчилль общинӑсен палатинче хӑй патне СССР посолне Громыкона чӗнсе илни ҫинчен тата шыв тулнипе сиен курнисене пулӑшмалли фонда 90.000 кӗренке стерлинг укҫа хывнӑшӑн ӑна Англи правительстви ячӗпе тав туни ҫинчен каланӑ. Общинӑсен палати Черчилль сӑмахне алӑ ҫупса йышӑннӑ.

Шыв тулнипе сиен курнӑ Голланди халӑхне Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисем пулӑшни

ГААГА, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Февраль уйӑхӗнче Ҫурҫӗр тинӗсӗнче вӑйлӑ ҫил-тӑвӑл пулнипе Голландие шыв тулнӑ. Шыв тулнӑ пирки тинӗс хӗрринчи провинцисенчи халӑх пысӑк сиен курнӑ. Голланди правительстви пӗлтернӗ тӑрӑх, шыв тулнипе 700.000 ҫынна яхӑн сиен курнӑ тата 1.400 ҫын пӗтнӗ.

Голландие инкек килсе тухнӑ пирки пӑшӑрханни ҫинчен СССР посолӗ Г. Т. Зайцев Голланди премьер-министрне пӗлтернӗ.

Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисем Голландири «Сиен курнисене пулӑшмалли фонда» пӗр миллион гульден укҫа ярса панӑ. Вӑл шутран: ВЦСПС-ран 500.000 гульден, Центросоюзран — 250.000 гульден, фашизма хирӗҫ кӗрешекен совет хӗрарӑмӗсен Комитетӗнчен — 100.000 гульден тата Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Ҫурӑйӑх Обществисен Исполкомӗнчен— 150.000 гульден илнӗ. Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисем пулӑшни ҫинчен Голландири радио урлӑ пӗлтернӗ.

Голландире тухакан хаҫатсем Шыв тулнипе сиен курнӑ Голланди халӑхне Совет Союзӗнчи обществӑллӑ организацисем пулӑшни ҫинчен пӗлтернисене курӑнмалла вырӑнсенче пичетлесе кӑларнӑ.

«Сиен курнисене пулӑшмалли фонд» представителӗсем Совет Союзӗн посольствине пырса, шыв тулнипе сиен курнӑ Голланди халӑхне тӑванла пысӑк пулӑшу панӑшӑн ВЦСПС-а, Центросоюза, фашизма хирӗҫ кӗрешекен совет хӗрарӑмӗсен Комитетне, Хӗрлӗ Хӗреспе Хӗрлӗ Ҫурӑйӑх Обществисен Исполкомне тата пӗтӗм совет халӑхне тав тума ыйтса каланӑ.

США Францин шалти ӗҫӗсене сӗмсӗррӗн хутшӑнни

ПАРИЖ, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). «Юманите» хаҫат ҫапла пӗлтерет: Америкӑн Франциri влаҫӗсем хӗтӗртнипе Дюнкерк портӗнче Китай Халӑх Республикине тухса кайма хатӗр тӑнӑ «Янг-Тзе» пӑрахута тытса чарнӑ. Ҫак пӑрахутӑн Мускавра пулса иртнӗ пӗтӗм тӗнчери экономика канашлӑвӗнче Франципе Китай хушшинче тунӑ суту-илӳ договорӗ тӑрӑх сутнӑ таварсене Китай Халӑх Республикин ҫурҫӗрти порчӗсене илсе каймалла пулнӑ. Китая яма палӑртнӑ таварсем хушшинче листаллӑ тимӗр, хурҫӑ, химипе фармацевтика таварӗсем тата удобренисем пулнӑ. Ҫак таварсене тиесе яма Франци влаҫӗсем кирлӗ документсене пурне те туса панӑ пулнӑ.

Анчах Америка влаҫӗн представителӗсем Дюнкерк портӗнче ҫула тухса кайма хатӗр тӑракан «Янг-Тзе» пӑрахута курсан, ӑна тытса чарма кирлӗ мерӑсем йышӑннӑ. «Юманите» хаҫат ҫакна палӑртать: Китай Халӑх Республикине грузсем яма чарас тӗлӗшпе Вашингтонран хытӑ хӗснӗ.

Америка влаҫӗсем Францин шалти ӗҫӗсене ҫакӑн пек сӗмсӗррӗн хутшӑнни — Францин тулашри суту-илӗвӗн ыйтӑвӗсене Парижра мар, Вашингтонра татса панине кӑтартакан тата тепӗр тӗслӗх пулать.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: иртнӗ кун хушшинче Корея Халӑх ҫарӗн соединенийӗсемпе Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсем Англипе Америка интервенчӗсене тата Ли Сын Ман ҫарӗсене хирӗҫ артиллерирен персе тӑнӑ.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтаксем паян тӑшманӑн 6 самолетне персе ӳкернӗ, 3 самолетне сиенленӗ.

ПХЕНЬЯН, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ февралӗн 25-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ.

Иртнӗ кун хушшинче Корея Халӑх ҫарӗпе Китай халӑх добровольцӗсен чаҫӗсем Америкӑпа Англи интервенчӗсене тата Ли Сын Ман ҫарӗсене хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫнӑ.

Тӑшман самолечӗсене хирӗҫ кӗрешекен салтаксем паян тӑшманӑн икӗ самолетне персе ӳкернӗ.

Америка авиацийӗ Корея хулисем ҫине тискеррӗн тапӑнать

ПХЕНЬЯН, февралӗн 24-мӗшӗ. (ТАСС). Америка авиацийӗ ҫаплах Пхеньян, Хамхын, Вонсан ҫине тата ытти хуласемпе ялсем ҫине тапӑнать. Ирхине 4 сехет те 30 минутра Америкӑн «В-29» йышши йывӑр бомбардировщикӗсем, истребитель-штурмовиксем пулӑшнипе, Пхеньянри пӗр квартал ҫине 253 фугаслӑ бомба пӑрахнӑ. Ҫакна пула нумай землянкӑсене тата 5 шкула ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, 174 ҫын пӗтнӗ, вӑл шутра 62 ача. Бомбӑсем пӑрахнӑ пӗтӗм района вут хыпса илнӗ, 12 сехет хушши ҫунса тӑнӑ.

Паян Америка штурмовикӗсем Хамхын районӗнчи ял ҫине тапӑннӑ тата уйра ӗҫлекен хресченсене пулеметсенчен пенӗ. Вилнисемпе аманнисем пур.

Америка интервенчӗсем тыткӑна илнисен ҫар лагерӗнче ҫӗнӗрен тунӑ тискер ӗҫ

ЛОНДОН, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Токиори корреспонденчӗ пӗлтернинчен ҫакӑ курӑнать: гоминданпа Ли Сын Ман агенчӗсем тыткӑна илнӗ Китайпа Корея ҫар ҫыннисене ҫаплах тискеррӗн тыткалаҫҫӗ.

Февралӗн 22-мӗшӗнче Чечжудо утравӗ ҫинчи тыткӑнри ҫар ҫыннисем валли тунӑ лагерьсен пӗр секторӗнче «ҫакӑнса вилнӗ» Китай ҫар ҫыннине тупнӑ.

АМЕРИКА САЛТАКӖСЕМ ИРТӖХНИНЕ ХИРӖҪ

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчӗ Пусанран (Корея) пӗлтернӗ тӑрӑх, февралӗн 21-мӗшӗнче Америка салтакӗ портра ӗҫлекен Корея рабочине персе пӑрахнӑ. Ҫакна хирӗҫ протестлесе, Пусан портӗнче ӗҫлекен пин рабочи ларса ирттермелли забастовка тунӑ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: йӗлтӗрҫӗсен республикӑри ӑмӑртӑвӗнче лайӑх вырӑн йышӑннӑ юлташсем (сулахайран сылтӑмалла)—Л. Г. Вилюнова, А. В. Родионочев, М. М. Михайлов, Р. Н. Дорофеева, А. Г. Ермолаев, А. С. Мартынов.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Йӗлтӗрҫӗсен республикӑри ӑмӑртӑвӗ

Февралӗн 22—23-мӗшӗсенче Шупашкарта йӗлтӗрҫӗсен республикӑри ӑмӑртӑвӗ пулчӗ. Ӑмӑртӑва 300 ҫын ытла хутшӑнчӗ.

Ӑмӑрту хӗрачасем 5 километр ӑмӑртса чупнипе пуҫланчӗ. Вӗсем хушшинче Ҫӗмӗрле районӗнчи «Колхозник» спорт обществи членӗ Р. Пыркова пӗррӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ. Хӗрарӑмсенчен ҫак дистанцире Н. Краснослова («Медик» спорт обществи) мала тухрӗ.

Ҫамрӑк арҫынсем тата арҫынсем 18 километр ӑмӑртса чупрӗҫ. Ҫамрӑк ачасенчен Шупашкарти «Молния» спорт обществин членӗ Российский, 1 сехет те 20 минут та 30 секундра чупса тухса, пӗррӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ. Арҫынсенчен 80 ҫын 18 километр ӑмӑртса чупрӗҫ. Ӑмӑрту малтан пуҫласа вӗҫне ҫитичченех вӑйлӑ пулчӗ. М. Михайлов тата А. Мартынов («Искра» обществинчен), И. Васильев тата В. Смольников («Колхозник» обществинчен) малти вырӑна тухассишӗн вӑйлӑ ӑмӑртрӗҫ. М. Михайлов пӗррӗмӗш вырӑна тухрӗ.

Ҫак вӑхӑтрах йӗлтӗрпе трамплин ҫинчен сикмелли ӑмӑрту вӗҫленчӗ. Арҫын ачасем хушшинче вӑрӑмӗшне сикессипе «Искра» спорт обществи членӗ Николаев мала тухрӗ.

Ӑмӑртӑвӑн иккӗмӗш кунӗ хӗрарӑмсем 8 километр, арҫынсем 30 тата 50 километр чупнипе пуҫланчӗ. Хӗрарӑмсенчен 8 километр ӑмӑртса чупса Л. Вилюнова («Искра») мала тухрӗ.

30 километр чупнӑ ӑмӑртура «Искра» спорт обществи членӗ А. Мартынов юлташ пӗррӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ. Йӗпреҫ районӗнчи «Колхозник» спорт обществи членӗ П. Яковлев иккӗмӗш вырӑна тухрӗ. 50 километр чупнӑ ӑмӑрту питӗ ӑнӑҫлӑн иртрӗ. Малтанхи 20 километра И. Васильев («Колхозник») чи хӑвӑрт чупса тухрӗ, М. Михайлов («Искра») иккӗмӗш, Вишневский («Молния») тата Смольников («Колхозник») виҫҫӗмӗшпе тӑваттӑмӗш вырӑнсенче. Анчах та тепӗр 10 километр чупнӑ хыҫҫӑн М. Михайлов Васильевран юлчӗ. Вишневский Смольниковран иртсе кайрӗ. 50 километра М. Михайлов 3 сехет те 28 минут та 40 секундра чупса тухрӗ, пӗррӗмӗш вырӑна йышӑнчӗ. Кун пек хӑвӑрт чупакан республикӑра халиччен пулманччӗ-ха. Васильев—иккӗмӗш, Вишневский — виҫҫӗмӗш вырӑна тухрӗҫ. Ҫак дистанцире 7 ҫын спорт классификацийӗн пӗррӗмӗш разряд нормине тултарчӗҫ.

Икӗ кун ӑмӑртнӑ хыҫҫӑн, пӗррӗмӗш ушкӑн енӗпе «Искра» спорт обществи мала тухрӗ.

Хуласем енӗпе — пӗррӗмӗш вырӑнта Шупашкар хули команди. Районсем хушшинче пӗррӗмӗш вырӑна Чкаловски район команди йышӑнчӗ.

Мала тухнӑ командӑсене кубса ҫӗрекен парнесемпе дипломсем парса наградӑланӑ.

Шкул валли ҫӗнӗ ҫурт

Шупашкар районӗнчи Ҫӗнъялти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул ҫурчӗ кивелнӗ. Кӑҫал ял Советне кӗрекен ӗҫҫыннисем шкул валли ҫӗнӗ ҫурт лартма йышӑннӑ. Ҫурт тума 500 кубометр йывӑҫ, кирпӗч тата цемент кӳрсе килнӗ. «Знамя революции» тата «Красный герой» колхоз членӗсем ытти материалсене те хатӗрлесе ҫитерессишӗн ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

— Ҫитес вӗренӳ ҫулӗнче ачасем валли ҫӗнӗ шкул ҫуртне туса пӗтеретпӗр,— теҫҫӗ колхозниксем.

В. НИКИТИН.

Ӗҫчен ҫемье

Сталин ячӗпе тӑракан колхозра хӑйӗн ӗҫченлӗхӗпе мухтава тухнӑ Виктор Сорокин ҫемйи пурӑнать. Ҫак ҫемье колхоз производствинче тӑрӑшса ӗҫлесе ҫулсерен пиншер ӗҫкунӗ тӑвать. Пӗлтӗр ҫемьери ӗҫлеме пултаракан 5 ҫын 1.500 ӗҫкунӗ тунӑ. Ӗҫкунӗсем тӑрӑх чылай тӗштырӑ, ҫӗрулми, пахча ҫимӗҫ илнӗ. В. Сорокин коммунист хӑй пӗччен 700 ӗҫкунӗ тунӑ.

В. ДИМИТРИЕВ.

Советски районӗ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Кӑмака тумалли тата кӑмака хутмалли правилӑсем

Кӑмака хутнӑ чухне пушар тухасран сыхланӑр. Вутӑ хутнӑ кӑмака патӗнче яланах ҫын пултӑр. Пӳртре ачасене пӗччен ан хӑварӑр. Спичкӑна тата ҫунакан япаласене тӗплӗ пуҫтарса хурӑр.

Кӑмака тумалли тата кӑмака хутмалли правилӑсене тӗплӗн пурнӑҫласа пырӑр. Социализмлӑ пурлӑха тата хӑвӑр килти пурлӑха та вут-кӑвартан сыхлӑр!



1. Ҫӗнӗ кӑмака тунӑ чухне тӗтӗм тухмалли ҫул тата ҫуртӑн йывӑҫран тунӑ пайӗсем хушшине 25 сантиметртан кая мар хӑвармалла, унта кирпӗч тата икӗ сий кӗҫҫе хумалла, кӗҫҫине тӑмлӑ шывра шӳтермелле; кӑмакапа ҫуртӑн ҫунакан пайӗ хушшине нимӗн те тултарман пулсан, вара 35 сантиметр хушӑ хӑварас пулать.

2. Кӑмакапа йывӑҫ перегородка хушшине 13 сантиметртан кая мар хӑвармалла, унта кирпӗч тата икӗ сий кӗҫҫе хумалла, кӗҫҫине тӑмлӑ шывра шӳтермелле.

3. Кӑмака ани умӗнче вут хыпса илме пултаракан стена пулсан, ӑна вутра ҫунман япалапа витмелле; стена ҫумне ҫапнӑ ҫунман япала кӑмака алӑкӗнчен аялалла 25 сантиметр, кӑмака алӑкӗнчен ҫӳлелле те 25 сантиметр пултӑр.

Кӑмака анипе ун умӗнчи стена хушшинчи вырӑн 1,25 метртан кая мар пулмалла.

4. Урай хӑми ҫине кӑвар ӳкнипе пушар тухни ан пултӑр тесе, кӑмака ани умне 70—50 сантиметртан пӗчӗк мар тимӗр листи ҫапса хумалла.

5. Кӑмакасемпе тӗтӗм тухмалли трубасене, кашни кун хутнӑ чухне пушшех те, пӗрмаях сӑнаса тӑрас пулать,—кӑмака е труба пӑсӑлни палӑрсан, ҫийӗнчех тӳрлетмелле.

6. Кӑмакасемпе тӗтӗм тухмалли трубасен хушӑк-шӑтӑк ан пултӑр. Кӑмакасемпе трубасене шуратас пулать.

Кашни кун хутнӑ вӑхӑтра кӑмака хӑрӑмне икӗ уйӑхра пӗр хутран кая мар тасатса тӑмалла.

7. Кӑмака алӑкӗсем яланах юсавлӑ пулччӑр.

8. Кӑмакара вутӑ ҫуннӑ чухне кӑмака алӑкне хупса тӑратмалла, поддувало алӑкне уҫмалла. Вутӑ пуленкисем тӑршшӗпех кӑмакана кӗмелле пултӑр, вара кӑвар ӳкнипе е вӗри ҫапнипе пушар тухасран сыхланма май пулать.

9. Кӗлпе кӑмрӑка лайӑх хупӑнакан тата уралла (урисем 20 сантиметртан лутра мар пулмалла) савӑт-сапана кӑларас пулать.

10. Урай хӑми ҫине шӗл кӑвар тултарнӑ чугун лартма юрамасть, хӑмана вут хыпса илме пултарать.

11. Кӑмакасене ытлашши ан хутӑр. Ытлашши хӗрнӗ кӑмака ҫуркаланать, вара пушар тухма пултарать.

Ҫанталӑк сивӗ тӑнӑ вӑхӑтра кӑмакасене кун каҫиччен темиҫе хут, пӗчӗкшерӗн хутсан лайӑхрах пулать.

Ҫаксене тума юрамасть:

1. Кӑмакара вут чӗртнӗ чухне бензин, краҫҫын тата ытти хытӑ ҫунакан шӗвекпе сапмалла мар.

2. Кӑмакасемпе тӗтӗм тухмалли трубасем ҫумне ҫунакан япаласем (вутӑ, хут, улӑм, кӗпе-тумтир т. ыт. те) хумалла мар, унта кун пек япаласене типӗтмелле мар.

3. Пушартан сыхланас тӗлӗшпе ӗҫлекен органсенчен ыйтмасӑр вӑхӑтлӑх кӑмакасем лартма, куҫарса лартма тата хутма юрамасть.

4. Кӑмакари тӗтӗм вентиляци валли хӑварнӑ шӑтӑк витӗр тухмалла туни пулмалла мар.

5. Тӗтӗм тухма тимӗр труба, ҫавӑн пекех тӑм труба е тӑмпа шӑлнӑ йывӑҫ труба лартма юрамасть, ун пек тусан пушар тухма пултарать.

6. Кӗлпе кӑмрӑка ҫунакан савӑт-сапана хума тата ҫурт ҫывӑхне кӑларса тӑкма юрамасть.

7. Вут хутнӑ кӑмакана пӑхакан ҫынсӑр хӑвармалла мар.

8. Кӑмака хутма е вут хутнӑ кӑмакана пӑхма ачасене хушма юрамасть.

Граждансем!

Пушартан сыхланмалли правилӑсене пурнӑҫласа пырӑр, вут-кӑварпа выляма юраманни ҫинчен ачасене ӑнлантарса парӑр. Ачасене социализмлӑ пурлӑха сыхлама вӗрентӗр.

Кӑмака хутнӑ вӑхӑтра ачасене пӗччен ан хӑварӑр, вӗсем, айван пирки, килти япаласене вут тивертме, хӑйсем те пушартан инкек курма пултараҫҫӗ.



Пушартан сыхланас тӗлӗшпе ӗҫлекен пай.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 01017 Типография №1 Чувашполиграфиздата, Тираж 20.000 экз.